39-74

Н. МРАҪКА

# АВАН ПУРĂНАТПĂР

ЧĂВАШГОСИЗДАТ ○ 1939

Н. МРАӇКА

Сигнальный экземпляр

# АВАН ПУРĂНАТПĂР

*5 АКТЛĂ ПЙЕСĂ*

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
ШУПАШКАР ◆ 1938

## ВЫЉАКАНСЕМ:

1. **Кришша**—колхоз председателě, коммунист.
2 **Анук**—Кришша арăмě.
3. **Укçине**—Анук амăшě, ватăскер.
4. **Саӈук**—çамрăк хěр. Комсомол йачейки çекретарě. Бригадир.
5. **Таӣйана**—колхозницă.
6. **Çитăр**—хуралçă, колхозник.
7. **Паљук**—йединоличник.
8. **Матěрне**—колхозницă, активисткă.
9. **Васухха**—Паљук арăмě.
10. **Пеӗă**—колхозник, комсомолец.
11. **Максăм**—счетовод, кулак ывăлě.
12. **Усăп**—ěлěкхи куштан.
13. **Усланкин**—милиционер, ěçе тěплě тума тăрăшмаст.
14. **Таис**—Усланкин арăмě.
15. **Çамрăк**—пуштăпа çўрекен.

Оркестр. Радио. Колхоз уйавěнчи çамрăксем; колхозниксем, колхозницăсем т. ыт. те.

---

## ПĔРРЕМĔШ АКТ

Сценă—пусăра. Йал йенче—уйхапхи. Тырă амбарĕсем куранаççĕ. Инçетре радио тăрăх савăнăçлă кĕвĕ калană сасă илтĕнет.

Ç и т ă р пĕчченех, пăшал йăтнă, уткаласа çӳрет. Уй хапхинчен тухса, П а ђ у к килет. Аллине вĕçне хĕреслесе улăм çыхнă патак тытнă. Пиншак çинчен çыхнă пиçиххи хушшине пуртă хĕстернĕ. Хĕрĕнкĕрех.

П а ђ у к (*Çитăр тĕлне çитсен*). Ан çилен... Çитăр ку-ум. Праçник йачĕпе кăштах сыпрăм-ха пайан...

Ç и т ă р. Мĕншĕн çиленес, Пађук кум?..

П а ђ у к. Пуçланă литра ĕçсе йама памарĕç... Пушар тухнă пек хăвалаť Кришша, йакуђă-ваđă. Мăнкун çулталăкра иккĕ килет тет-ши вăл?..

Ç и т ă р. Вăхăчĕ çапласке-ха, Пађук кум. Тырă акас пулаť.

П а ђ у к. Есĕ те аташнă, Çитăр кум... Тырă акмасăр пурăннă, тетĕн-и есĕ мана?.. Микулниччен вăхăт пайтах халĕ.

У ç ă п с а с с и (*сценă хыçĕнче*). Акма пăрахăр!.. (*Çынсем шавланă сасă илтĕнет.*)

Ç и т ă р. Кам çав?.. Мĕн кăшкăраççĕ унта?.. Пирĕн бригадăçке... Ăçта кайаççĕ кусем?

Сценă хыçĕнчен У ç ă п, Т а ť й а н а, вĕсем хыçĕнчен тата 7—8 çын васкаса килеççĕ.

Ç и т ă р. Уçăп, ăçта кайатăр? Акса пĕтертĕр-и?..

У ç ă п. Кам, хăçан мăнкунра тырă акма тухнине курнă?.. Халăха хирĕç кайма разĕ совет хушаť?..

П а ђ у к. Калап вĕт, йакуњă-вањă... Урăх нихăш йалта та акма тухнине каламаççĕ...

Ç и т ă р. Уçăп, ан аташ-ха есĕ... Акма тухнă йапалана акасах пулаť..

Т а ť й а н а. Ма ху акмастăн?.. Турра маннă пулсан, аках...

Ç и т ă р. Еп... хуралçă. Еп—хам вырăнта. Чанка темерĕн çав!.. (*Уйрăлса кайаť*).

П а ђ у к. Тепĕр тесен... кам хĕсĕрлесех актараť сире?..

У ç ă п. Разĕ хамăр ĕçпе хамăр хуçа пулма пултараймастпăр-и епĕр?..

П а ђ у к. Сирĕн пирки пире—йединоличниксене те хăвалаççĕ. Пирĕн мĕн ĕç пур, йакуњă-вањă? Колхоз тунă-тăк, хуť те пуçăрсене çапса çĕмĕрĕр...

Т а ť й а н а. Преми кирлĕ вĕсене... преми!

У ç ă п. Вĕсене—преми, пире—турă ылханлăхĕ...

Т а т ӳ а н а. Ӳалӗпе мӑнкун тӑваҫҫӗ... Акмастпӑр! Нимӗн те пулас ҫук...

М а т ӗ р н е п е С а ҥ у к чупса килеҫҫӗ.

С а ҥ у к (*тӑвӑлланса*). Мӗншӗн акма чарӑнтӑр?..

М а т ӗ р н е. Ӳӗркерен тухса айкашатӑр ҫав вара...

Т а т ӳ а н а. Кришша пуҫӗ ҫине кайса акӑр, Кришша пуҫӗ ҫине!..

П а љ у к. Ытлашши ӳӗркерен тухатӑр есӗр, Саҥук. Тӗнчипе праҫник тӑваҫҫӗ... Есӗр тырӑ акатӑр.

М а т ӗ р н е. Вӑхӑтра акни аванах ӗнтӗ. Ан чӑкӑлташса тӑрӑр. Ман хам участка сухаласа пӗтересчӗ-ха... (*Васкаса кайат.*)

С а ҥ у к. Тата нумайччен чӑркашса тӑратра? Ӳе бригадӑ намӑса кӗтӗр тетӗр-и?..

У ҫ ӑ п. Акасси акӑпӑр та, Саҥук, анчах пайанхи кун мар. Турра кӳрентерес мар... Турӑ—турпас мар, тенӗ ӗлӗкренех. Ылханса тем сийен ӳарӗ тата... Тырӑсӑр тӑрса ӳулӑпӑр... Кам тӑрантарӗ вара пире? Кам?..

Т а т ӳ а н а. Шӑркалчӑк, есӗ тӑрантаратӑн-и?.. Тырӑ акасси комсомолра вӗлтлеттерсе ҫӳресси мар вӑл...

У ҫ ӑ п. Вӑрлӑх вырӑнне хӑйсене сапаламала... Микулниччен аксан, кам тырӑ пулнине курнӑ?..

Паљук. Пăтратаççĕ халăха, йакуђă-вађă...

Макçăм васкаса килет.

Макçăм. Мĕншĕн акма чарăнтăр?..

Уçăп. Разĕ совет хушаќ—халăх кăмăлне хуçса праçник кун актарма?

Паљук. Макçăм, есĕ ăслă çын, правленинче те ларан. Каласа пар тĕрĕссипе: мăнкун чух акмасан, акмасăр йулатпăр, тетĕр-и есĕр, йакуђă-вађă?..

Макçăм. Еп мĕн пĕлетĕп вара?.. Еп пĕчĕк çын, йулташсем. Манран аслăраххисенчен ыйтăр. Иккĕмĕш бригадă та акма чарăннă...

Саңук. Макçăм!..

Макçăм. Конечнă акмала, Саңук. Епĕ хам икĕ çул Хĕрлĕ çарта пулнă, ĕç дисциплини кирлине пĕлетĕп...

Таќйана. Иккĕмĕш бригадă саланнă, тет. Епĕр мĕн туса тăратпăр тата?..

Уçăп. Киле каймала кăна...

Паљук. Сирĕн хыçран епĕр те... йакуђăвађă.

Уçăп. Саланăр! саланăр!.. (*Кайма хатĕрленсе, сăхманĕсене тăхăна пуçлаççĕ.*)

Çулпа, васкаса, Кришша килет. Кришшана курсан, çынсем пăртак лăпланаççĕ. Хăшĕ акма кайаççĕ.

Кришша (*ушкăн патне çитсе*). Саңук, мĕншĕн акма чарăнтăр?

Саңук. Микулниччен аксан тырă пулмасќ, теççĕ...

Максăм. Иккĕмĕш бригадă та акма пăрахрĕ, Григори Петрович...

Кришша. Мĕншĕн пăрахнă?..

Максăм. Каларăм—акмала тесе...

Татйана. Пăрахмасăр, епĕр те пăрахатпăр!..

Кришша. Есĕр мĕн, чăнласах тырă акассине чăрмантарас тетĕр-и?..

Паҙук. Кришша...

Кришша. Есĕ мĕншĕн çĕр валеçнĕ çĕртре мар, Паҙук пичче?..

Паҙук. Ан йатлаç-ха мана... Епĕ совета хирĕç çын пулман. Пур заданисене те вăхăтра тӳлесе пыратăп...

Кришша. Вара?!.

Паҙук. Тырă пулмасан, кам ответ тытать, йакуҥă-ваҥă?..

Татйана. Ăна мĕн?.. Анукне лартрĕ те вĕçтерчĕ... Хăвала кайран...

Уçăп. Шыра... (*Халăх шавлама пуçлать.*)

Кришша. Кам калать тырă пулмасть тесе?

Татйана. Епĕр халиччен тырă акса курман çынсем-им?..

Уçăп. Ĕлĕкхи йăласене пăсса тырă тăваймăпăр. Халăх, разĕ епĕр колхозĕпе те Кришшаран ухмах-и?.. Акмастпăр. Киле кайатпăр... Саланăр!..

Татйана. Атăр, атăр! Саланăр!.. (*Кайать*).

Кришша. Саҥук, Татйанана çирĕпрех асархаттарас пулать. Пĕр пилĕк ĕçкунĕлĕх штрафа ан лектĕр вăл! Тата кам?

Кам тырӑ акма пӑрахса ёçке кайасшӑн?..

П а љ у к. Ытла ан хӑрат, йакуњӑ-вањӑ...

К р и ш ш а. Есĕ, Паљук пичче, каçхине йалсоветне пыратӑн.

П а љ у к. Епĕ çĕр валеçме кайатӑп терĕм-иç... (*кайат*) йакуњӑ-вањӑ...

К р и ш ш а. Сан çинчен, Уçӑп пичче, правленинче уйрӑм сӑмах тапратӑпӑр...

У ç ӑ п. Правленипе ан хӑрат... Разĕ правленине хамӑра хирĕç кайма суйланӑ епĕр?.. (*Колхозниксем ёçе кайнине астуса.*) Мана мĕн, епĕ... йалпа пĕрле... (*Васкаса кайат.*)

К р и ш ш а. Макçӑм, епĕ иккĕмĕш бригадӑна чупатӑп. Есĕ, васкаса, çведĕни çырса хатĕрле... Акма тухни çинчен РИК'а пĕлтерес пулат.

М а к ç ӑ м. Конечнӑ, Григори Петрович. Авӑ, пуштӑ килет, хаçат таврашӑсене те илсех кайам...

Кришша васкаса тухса кайат. Сценӑ çине пуштӑпа çӳрекен çамрӑк кĕрет.

Ç а м р ӑ к (*пуштӑ сумккинчен хаçат-журналсем кӑларса*). Пуштӑ! пуштӑ!.. Тырӑ тухӑçĕшĕн кĕрешекенсем ваљљи—хаçат, савнисем ваљљи—çыру...

М а т ĕ р н е (*çамрӑк умне чупса тухат*). Мана ваљљи çыру пур-и? (*Ыттисем те пуштӑпа çӳрекене хупӑрласа илеççĕ.*)

Ç а м р ӑ к. Пур, пур, Матĕрне аппа... (*Çыру кӑларса парат.*)

Матĕрне. „Ĕçхĕрарăмĕ“ çырăннăччĕ те епĕ çав вара..

Çамрăк. „Ĕçхĕрарăмĕ“ те пур, ме акă... (*Матĕрне, журналпа çыруне илсе, айăккинеле кайса вулама тытăнать.*)

Саньук. Мана „Çамрăк колхозник“ пар-ха, ача...

Пальук. Мана „Капкăн“...

Петĕ (*сăнчăр сĕтĕрсе васкаса пырать*). „Сунтал“ пур-и?..

Çамрăк. Чимĕр-ха... есĕр йĕркелĕ пулăр. Ăçта пурте харăс тăрăнатăр? Черет тăрса кайăр...

Сасă. Калаçса вăхăт ирттерсе тăратăн... Ĕçе васкамала пирĕн.

Çамрăк. Манран тухнă йăла мар... Малтан бригадиртан пама пуçлатăп. Акă сана, Саньук, „Çамрăк колхозник“ тата савнинчен çыру. (*Саньук, хаçатпа çыруне илсе, айăккинеле кайса вулать. Çамрăк ыттисене те—хăшне хаçат, хăшне—журнал парать.*)

Петĕ. „Сунтал“ ăçта?..

Çамрăк. Пичетленет, терĕç...

Петĕ. Виç уйăх пичетлеççĕ ĕнтĕ. Ав йепле ударниксем вĕсем...

Пальук. „Капкăн“ пар-ха мана...

Çамрăк. „Капкăн“ çук, килеймен-ха... (*Кайать.*) Пуштă! пуштă!.. Тырă тухăçĕшĕн кĕрешекенсем валльи—хаçат, савнисене—çыру...

М а т ĕ р н е (*хавасланса*). Иљушран, Иљушран! Кĕркунне киле таврăнатăп, тесе çырнă çав вара... (*Çыруне хĕвне чикет.*)

С а ђ у к (*хаçатсене чĕркесе*). Ну, аӑр акма! Хаçатсене каннă чух та вулăпăр...

П е ӑ ă. Паљук пичче, аӑа часрах... Сăнчăр туртса сан йату тĕлне çитрĕмĕр...

П а љ у к. „Капкăн“ памарĕç, йакуђă-вађă... (*Петăпа иккĕшĕ кайаççĕ.*)

М а т ĕ р н е. Ман сухаламали нумайăх йулмарĕ... Часрах пĕтересчĕ çав вара... (*Пурте кайаççĕ.*)

М а к ç ă м. Сађук!

С а ђ у к. Мĕн, ача?

М а к ç ă м. Çыру камран?

С а ђ у к. Сана мĕн ĕç?.. Есĕ, счетовод тесе, пурне те пĕлесшĕн-и? Савнинчен... хĕрĕн хĕрĕх тус тенине илтмен-и есĕ?..

М а к ç ă м. Камран, кала, Сађук... Тӳсеймест ман чун...

С а ђ у к. Кĕвĕçетĕн мар-и есĕ, ача?

М а к ç ă м. Йуратса, Сађук, чĕререн йуратса...

С а ђ у к. Епĕ кайам-ха, ача. Каç куратпăр вĕт...

М а к ç ă м. Урама тухатăн-и?..

С а ђ у к. Мĕнле пулĕ, ача... (*Чупса кайаӑ.*)

**Ч а р ш а в.**

## ИККӖМӖШ АКТ

Сценă—Кришшан çĕнĕ, чипер пӳртĕнче. Пур кĕтесре те тасалăх палăрат. Краваt çинче типтерлĕ вырăн. Çтена çумĕнче сехет, куçкĕски. Кăмака кĕтессинче шкап. Сĕтел кĕтессинче радио. Хуткупăс пур. Вăхăт—каçхине. Пӳртре електричĕствă лампи çунат. Кăмака умĕнче—вĕретме лартнă сăмавар. Пӳрте А н у к кĕрет. Аллинче ĕне сăвакан витре. Хурлăхлă. Салхулăн сăхманне хывса, вырăн çине пăрахат, выртса пĕр кана йĕрет. Кăшт тăрсан, У к ç и н е кĕрет.

У к ç и н е (*сăхсăхса*). Ман килес... (*Анук çине пăхса тăрат*). Мĕн пулнă сана, хĕрĕм?..

А н у к. Есĕ килнĕçке, анне... Питех кăмăл хуçăлчĕ пайан. Фермăран ĕне суса килетĕп те... Таtйана аппасем тĕлпулчĕç. Пĕр ушкăн хĕрарăм... Такам та пур унта... Тем те калаcа йатлаçса тăкрĕç... Ах, анне... (*Йĕрет.*) Ăçта кайса кĕрем-ши?..

У к ç и н е. Ылханĕ сан пуçна ан тивтĕр, хĕрĕм. Сана ылханни мана та тивĕ. Кĕрӳпе пĕрле çылăха кĕрсе, ман чуна тамăка ан йар, Анук... Ман кăкăр сĕчĕпе ӳснĕ есĕ...

А н у к. Кришшана колхоз предçедатĕлĕнчен кăларайрасчĕ... Мĕн мар пулĕччĕ пурнăç... Итлес çук çав вăл ман сăмаха...

Укçине. Итле мана, хěрěм: нуша курса пуранничен, пăрах ăна... Атă хам пата. Ас кěрсен, хăйех пырса тилмěрě...

Анук. Урăх тўссе пулмасть... Пыратăп, анне... Мана хисеплесен, председатěл ěçне пăрахě. Хисеплемесен—кирек мěн тутăр...

Укçине. Ей... пўлěхçě-ěм...

Анук. Арчана питěрсе кěрем-ха епě, анне. Сăмавара пăх есě... (*Тухса кайать.*)

Укçине. Питěрсе кěр, хěрěм, питěрсе кěр...

Радио. Колхозсен—тырпул тухăçлăхне хăпартас ěçре татăклă улшăну тумала, çакна тума колхозсене организаципе хуçалăх тата...

Укçине (*радиона чарма тăрăшать. Чарма пěлменнипе çиленсе хăй тěллěн сўпěлтетет*). Ей... пўлěхçě-ěм... Чарăнмасть тата!..

Урамра колхозниксем хаваслăн шавласа йурласа иртсе кайнă сасă илтěнет. Лашасене хăваланă, чарнă сасăсем илтěнеççě. Йуррин сăмахěсене те ăнланмала:

> Савăнсах пайан ěçлерěм
> Еп колхозăн хирěнче, хирěнче.
> Ех, мěн чухлě çěнě йурă
> Еп вěрентěм вěсенчен, вěсенчен...

Укçине. Ырлăха ма-ар... Тăп-тăрă урăлах ўсěр çынсем пек урамра йурласа çўреççě... Ей... пўлěхçě-ěм... (*Куççульне кěпе аркипе шăлать. Йурă айакка кайса, илтěнми пулать*).

Радио. Çуракине лайăх, организацилĕ тата кĕске вăхăтра ирттерес пулаттă. Ку ĕçре колхозниксен хайсемпе пĕрле йединоличниксене те хутшăнтарса, партипе правительствă хушнине пурнăça...

Укçине (*каллех радиона чарма тăрат, чараймаст. Çак вăхăтра Анук кĕрет*). Анук, чарсам çак хăйамата!..

Анук. Калатăр... Мĕн тăван çавăнпа, анне...

Укçине. Сассине илтес килми пулчĕ, хĕрĕм. Пуçтарăнтăна ес?..

Анук (*хурлăхлă сасăпа*). Пуçтарăнтăм та... Мĕнле-ши, анне?.. Чĕре ытла та вырăн та марçке...

Укçине. Тамаша! калаçса тăрат тата!..

Анук. Шухăшласан, чун хурланат, анне... Пурнăç шухăшланă пек пулмарĕ ман...

Укçине. Хăвах айăплă, çынна ÿпкелемели çук. Ман сăмаха пăхмарăн... Кайас Макçăма!.. Хăтана та пычĕ... Шутпа шутласах трудодни çапса пурăнат. Йал çинче те йатлă çын...

Анук. Кришшана йуратататăпçке-ха епĕ, анне...

Укçине. Йуратап... йурата-ап! Епĕр йуратмасăрах кайнă та—пурăннă. Ей... пÿлĕхçĕ-ĕм...

Анук. Йал сăмахĕ пулмасан, манран телейлĕ çын та пулмĕччĕ те... (*Сăмавар вĕресе*

*тухнине циссе, васкаса пырса трубине илет.*) Сămавар та вĕрерĕ... Кăмакара йашка пиç-нĕччĕ... Мансăрах çитĕр, ĕçтĕр ĕнтĕ çав...

Уксçине. Еп мĕн каланине итле, хĕрĕм: тӳшек-минтерсене ан хăвар. Арçын вăл вырăнсăр ним тума та аптăрать...

Анук (*ирĕксĕрленсе, сăхманне тăхăнса, кравать çинчи вырăна пуçтарать*). Тем тумала?.. нимĕн те тавçăраймастăп, анне...

Уксçине. Тамаша! тавçăраймастăп тесе лĕпĕртетсе тăрать тата! Чухламасть, тетĕн-и мана? Чухлатăп, хĕрĕм... чухлатăп. Хам та çамрăк пулса курнă... Пуçтар, пуçтар... Сансăр пуçне çара çĕрте пĕр çĕр выртсан выртĕ, тепринче хăйех вĕçтерсе пырĕ...

Кришша кĕрет.

Кришша. Анне те килнĕçке! Мĕншĕн ура çинче тăратăн, ларма вырăн çук-и сан валли? Ну, Анук, çураки пит аван пырать... Темĕскер мăнкунĕ çыхăнтарса хурасран хăранăччĕ. Матĕрне аппа çурçĕр иртсен икĕ сехетрех сухана тухнă пайан...

Уксçине (*хăй тĕллĕн*). Ей... пӳлĕхçĕ-ĕм...

Кришша. Йединоличниксем те ыран ирпе тухма сăмах пачĕç-ха... (*Паузă.*) Мĕн сăхманпах тăратăр есĕр?.. (*Анук йĕрнине курса*). Йĕретĕн мар-и çав есĕ? Мĕн пулнă сана?..

Уксçине. Чистийех улшăннă есĕ, кĕрӳ... Ху савăнатăн... арăмун çеç пурнăç çук...

Анук. Пĕтĕм йалйыш курайми пулчĕ ĕнтĕ. Урама тухма çук... Кӳршĕ-тăвансем пурте сивĕнсе çитрĕç... Пурнăç-и ку-у... (*йĕрет.*)

Кришша. Кам, мĕншĕн кураймасть?

Анук. Камне ăçтан каласа пĕтерен... йалĕпе. Пур ĕçе те сан çине йăвантараççĕ. Тырăсăр хăварать, тесе ӳпкелеççĕ. Праçникне праçник шутламастăр...

Кришша. Тырăсăр?.. Ха-ха-ха!..

Укçине. Тамаша!.. кулать тата! Кам йатласмĕ санпа? Кам ылханмĕ сана? Ваттисен йăлисене пăсатăр, кĕрӳ... Ей... пӳлĕхçĕ-ĕм... Турă паманнине илеймĕр. Турăран аслă пулаймăр...

Анук. Йалĕпе сăра лартнă... ĕçеççĕ, савăнаççĕ... Есĕ пур, сĕм вăрманти пек лар килте...

Кришша. Анук, пĕтеретпĕр акă акса... праçник тăватпăр. Сăрине те ларт, апат-çимĕçне те пĕçер... анчах хĕрсе ĕç тунă вăхăтра мар...

Анук (*çиленсе*). Ытла та тĕлĕнтеретçке ку... Мăнкун иртсен, кампа ĕçсе ларĕ-ши?..

Кришша. Кама кăмăл тăвăн—çавна хăнана чĕн, Анук. Ун çинчен текех калаçмăпăр. Кунĕпе ĕçре çӳресе, столовăйра апат çиеймерĕм. Мĕн те пулин çимели çук-и сан?..

Анук. Мĕн качча килнĕренпех çапла есĕ... Ир тăрсан—чей вĕрет, çын килсен—хăна ту,

каç пулсан—выран хатĕрле... Мана йуратмастăн... хисеплеместĕн пулсан, мĕншĕн качча илсе сайа йатăн-ши?.. (*Йĕрет.*)

Уксине. Пăрчăкан пек йăрă, уйăп пек илемлĕ хĕр патăм. Пăхма пĕлмесĕр сăнран йатăн. Çӳрен йал тăрăх йытă пек чупса. Кам хисеплет сана?.. Ей... пӳлĕхçĕ-ĕм...

Кришша. Сирĕн шутпа мĕн тумала ман?..

Анук (*йăлăнса*). Тархасшăн, Кришша, пăрах çав ĕçе... Председатĕлрен тух...

Уксине. Йал ĕçне сансăр пуçне те тăвакансем пулĕç, кĕрӳ...

Анук. Чăнах, Кришша, иксĕмĕр ырмиканми ĕçлĕпĕр. Лартар сăра... Ратнепе ĕçке тухăпăр... Шухăшла-ха хăвах, Кришша: мĕн чухлĕ ылхан тийетĕн ес хăв пуçу çине...

Кришша (*тарăхса*). Тупата итлес килми пулчĕ ман сире. Картран тухса калаçма пуçларăр есĕр...

Уксине (*çиленсе*). Çапла пулмасăр, ара! Есĕ çеç картран тухмастăн мар-и!.. Ăçта тавлашан санпа?.. Ху—йалсовет членĕ, хăвах—колхоз...

Кришша. Ăнланăр-ха: епĕ колхоз председатĕлĕ пулнишĕн савăнмала сирĕн... Ех-х!.. мĕн калаçасси пур вара...

Анук. Есĕ кунĕ-çĕрĕн чупса çӳренĕшĕн савăнмала-и манăн?.. Ех, Кришша... йуратмастăн, хисеплеместĕн есĕ мана... (*Йĕрет*).

Кришша. Анук, ан ухмахлан ĕнтĕ, лăплан... Ывăнна епĕ пайан. Ларар та... апат çийер...

Анук. Мана итлеместĕн, ман арçын мар есĕ... Йал пăхтăр сана, колхоз апат çитертĕр, вырăн сарса хатĕрлетĕр...

Кришша. Анук!..

Укçине. Ей... пӳлĕхçĕм... Капла йепле пурнăç пултăр? Кайар, хĕрĕм... Хуť йĕр, хуť йăлăн,—епĕр каланине пурпĕрех итлес çук вăл...

Кришша. Ăçта?..

Укçине. Тамаша! Ăçта тет тата! Сана качча тухнă тесе, Анукăн ниçта та пурнăç пулмĕ тесе шутлатăн-и есĕ?.. Хаљ ĕлĕкхи ма-ар!.. Хам хĕр хама ытлашши пулмĕ. Кайар, Анук... Ылханĕ сан пуçа ан тивтĕр... Ей... пӳлĕхçĕ-ĕм...

Кришша. Анук!..

Анук (*кăмăлне хытарса, йапалисене йăтать*). Йалпа пурăн савăнса!.. (*Укçинепе хăвăрт тухса кайаççĕ*).

Кришша (*ним тума пĕлмесĕр аптăраса тăрать. Алăкран тухма тăрса, каллех çаврăнать. Васкаса кăмака умĕнче ларакан чукуна сĕтел çине илсе лартать, аллине пĕçертет*). Чорт возьми!..

Пӳрте васкаса Татйана кĕрет.

Татйана (*алăкран кĕрсенех, йатлаçма пуçлать*). Есĕ мĕн, йăваша курса мăшкăла-

тăн-и? Мĕнле хăйса пилĕк трудодень штраф хурасшăн есĕ?..

Кришша. Татах ĕçе тухмасан, штрафне те хурăпăр... колхозранта кăларăпăр...

Татйана. Ай, тур-ту-ур!.. Колхозран кăларăпăр, тет. Ху пит ĕçлетне вара есĕ? Епĕр ĕçлемен çын-и? Лаша пулман-и пирĕн? Сан мĕн пулнă? Мĕнпе кĕнĕ есĕ колхоза?..

Кришша (*çиленсе*). Ну, ну!.. ытлашши пуплетĕн есĕ...

Татйана. Ытлашши пулмасăр!.. Йамăттипе тăрантас çине ларса йăрлаттарса çӳресси ĕçленийех марçке вăл! Çемйӳпе пурăнма пĕлместĕн, çынсене штраф тăватăн...

Кришша. Татйана аппа, йатлаçма правленине пыр луччă есĕ...

Татйана. Кукша темерĕн!.. Кайатăп... Хăваламасăрах кайатăп. Патша пулаймăн! Пурне те йарса илеймĕн. Чых... чых çын ĕçленине! Сана нумай кирлĕ... Епĕр пурăнкалăпăр-ха мĕнле те пулин... Ĕмĕрех председателте пулаймăн... Пит ан сик! (*Йатлаç-сах тухса кайат.*)

Кришша, хытах пăлханса, пĕр йапала патĕнчен теприн патне пырса тĕртĕнет. Радио тăрăх кăмăлне килĕшмен кĕвĕ илтĕнме пуçлат. Пĕр самант итлесе тăрсан, хăвăрт штепсĕле кăларса ывăтат. Урэй varrine пырса тăрса, шухăша кайса тăрат.

Саңукпа Петĕ кĕреççĕ.

Пеҫӑ (*хавасланн*). Кришша, хуткупӑс парса йар-ха. Вӑййа кайас тетпӗр...

Кришша. Чорт возьми! Сирӗн мӗн пурӗ те вӑййӑ шухӑшӗ кӑна... Кунӗпе ӗҫлетӗр.. Канас пулаҫ...

Санюк. Ху та ӗнертенпе ҫывӑрман пулӗ-ха, ача?.. Ҫынна каламали ҫук.

Кришша. Мана мӗн пӑхатӑр есӗр?..

Пеҫӑ. Ыран ирпе ҫӗре пурпӗрех валеҫсе пӗтеретпӗр...

Санюк. Выляамасӑр, кулмасӑр,—ӗмӗр иккӗ килет-им?..

Кришша. „Ӗмӗр, ӗмӗр“! Ҫтена хаҫатне хӑҫан кӑларатӑр?

Санюк. Хатӗр, ача. Сан статйиуна кӑна кӗтетпӗр.

Кришша. Кӗҫӗр ҫыратӑп. Матӗрнене хӗрлӗ хӑма ҫине кӳртес пулаҫ.

Санюк. Кӳртнӗ.

Кришша. Епӗ кӗҫӗр правленине пырай-мастӑп. Завхоза калӑр: ыран апат бригадӑпа пӗҫерме хатӗрлетӗр.

Санюк. Йураҫ, йураҫ...

Кришша. Каллех помидора кӑларса ларт-са пӗтерейменӗмӗр... Купӑста вӑрлӑхне те акма вӑхӑт ҫитнӗ.

Пеҫӑ. Ыран лартса пӗтеретпӗр.

Кришша. Шаннисем курӑнкалаҫҫӗ-хаунта. Ыран лайӑхрах тӗрӗслесе тух, Санюк. Йапӑх ӗҫлекенсене питлес пулаҫ. Пайанхи пек

ĕçлесен, Хыр-касси колхозĕпе ăмăртса ĕçлениче кайа йуласси те инçех мар... Колхоз ĕçне пире шанса панине манас пулмасť.

Саӊук. Мала тухасчĕ çав, ача...

Петă. Лĕпĕртететĕр кирлĕ мара! Хыр-касси колхозĕнчен кайа йулатпăр-и вара?.. А, купăс парса йар-ха есĕ, Кришша...

Кришша. Вăййа купăссăр кайма çук-и?..

Петă. Купăссăр тухсан, хĕрсем йуратмаççĕ. Кĕçĕрех кӳрсе парăп...

Кришша. Илсе кайăр, илсе кайăр! (*Петă купăса хăйех илсе пӳртрех калама пуçлаť.*) Чарăн! Урама тухсан çухăрттарăн...

Петă (*купăс калама чарăнса*). Аťа, Саӊук...

Саӊук. Есĕ кай-ха, Петă... Епĕ халех пыратăп.

Петă. Йаланах çапла есĕ..

Саӊук. Ман Кришшапа пĕр çекрет сăмах калаçмали пур, ача. Епĕ нумай тăмастăп... Сан хыçранах тухатăп.

Петă. Епĕ чĕнсен, пĕрмайах çекрет сан... (*Кăмăлсăрланса тухса кайаť. Алăкран тухсанах, купăс калана саса илтĕнет.*)

Кришша. Мĕн çекречĕ пур сан? Кала, итлетĕп...

Саӊук. Анук ăçта кайнă, ача?

Кришша. Мĕн тăватăн есĕ унпа?..

Саӊук. Анукпа йулташланса ӳснĕçке епĕр...

К р и ш ш а. Акă мĕн, Саҥук, ун пек çекрет кирлĕ мар мана. Анукпа калаçмали пулсан, хăй патне кай...

С а ҥ у к. Ăçта вăл?

К р и ш ш а. Амăшсем патне ĕç тума çĕр выртмалах кайрĕ...

С а ҥ у к. Арçын тени хĕрарăмсăр ытла та типтерсĕр çав... Йепле-ха ĕнтĕ чукуна таса сĕтел çинех лартнă...

К р и ш ш а. Итле, Саҥук: каланă сана Анук патне кай тесе. Кай...

С а ҥ у к. Йаланах йатлаçса кайан вара есĕ... Епĕ сана пичче вырăнне шутласа калаçас тесе килнĕччĕ, ача...

К р и ш ш а. Кала хуйт пĕреххутчен, чорт возьми!

С а ҥ у к. Никама та каламастăп тесе, сăмах пар, вара калатăп...

К р и ш ш а. Ну... йурĕ... каламастăп. Мĕн кирлĕ сана? Тархасшăн кала.

С а ҥ у к (*хăйусăрлансарах*). Пĕр хусах... качча илесшĕн те мана, ача... Мĕнле-ши, кайсан йурайт-ши? Каймасан аван-ши?..

К р и ш ш а. Ох-х! Ну-и çекрет!

С а ҥ у к. Калап вĕт... веç, каллех йатлаç-ма пуçларăн есĕ... Мĕн калаçасси пур вара санпа...

К р и ш ш а. Йатлаçан, тетĕн есĕ, Саҥук... Ан тарăхтар есĕ те пулин. Хаљ качча кайассине кам çынран ыйтса тăрайт?.. Пĕр-пĕрне

йуратататăр пулсан, йалсоветне кайăр та çырăнăр, ĕçĕ те пĕтнĕ.

Саӈук. Уншăн мар... есĕр пурăнса курнă, тесе шутлаттăм епĕ...

Кришша. Авă пăх, мĕнле лайăх пурăнатпăр епĕр...

Саӈук. Тем калаçан есĕ, ача. Нимĕн те ăнланмастăп...

Кришша. Анук мана пăрахса кайрĕ вĕт.

Саӈук. Ара, ача... Анук амăшсем патне ларма кайнă, терĕнçке...

Кришша (*хăйне хăй манса*). Ларма-а... Пурте пĕр йышши есĕр. Качча тухсан та чĕрçи çине лартса ачашламала сире... Ачашлама вăхăт çук пулсан...

Саӈук. Тепĕр вăхăтра пулсан, урăхла калаçаттăн та есĕ...

Матĕрне кĕрет.

Матĕрне (*хăйулăн Кришша патне пырса*). Кришша, чуптăвам-ха сана, ачам...

Кришша (*тĕлĕнсе*). Акă тепри килчĕ! Есĕ мĕн, ухмаха йернĕ-им, Матĕрне аппа?..

Матĕрне. Чунран йуратса, Кришша... Ан йĕрĕн-ха, ачам... (*Кришшана чуптăвать.*) Есĕ те, Саӈук... (*Саӈука та чуптăвать*).

Саӈук. Праçник йачĕпе-и ку, Матĕрне аппа?..

Матĕрне. Каçарăр, ачамсем... Савăннипе килтĕм. Вара çав пур коммуниссене, ĕречĕпе тăратса, ыталаса тухса тав тăвайрасчĕ...

Кришша. Мăнкун сĕрĕмĕ тивнĕ пуҫ сана пайан, Матĕрне аппа?..

Матĕрне. Ҫирĕм ҫул...

Кришша. Ҫирĕм ҫул тăлăх пурăннине пĕлетпĕр. Анчах уншăн нимĕн савăнмали те ҫук... Маншăн ав, пĕр каҫ тăлăх пурăнасси те тем пекех йăвăр...

Матĕрне. Ҫирĕм ҫул куҫсăр пулнă епĕ, Кришша...

Кришша. Трахпункта йатарласах ҫӳрерĕн вĕт. Сывалтăн пулĕ ĕнтĕ?

Матĕрне. Сывалтăм, Кришша... Сывалтăм. Пайан тухтăр пăхрĕ те, трахомран тасалнă, терĕ ҫав вара.

Кришша. Фу! паҫăрах ҫапла каламала санăн, Матĕрне аппа...

Саҥук. Мĕн пулнă ку Матĕрне аппана тесе, тĕлĕнсе ларатăп епĕ.

Матĕрне. Акă, хут ҫине те ҫырса пачĕ... (*Хĕвĕнчен хут татăкки кăларса парать.*)

Кришша (*хута вуласа пăхса*). Хавас... хавас, Матĕрне аппа...

Матĕрне. Ĕлĕкрех Хутаҫ Матĕрнипе Суккăр Матĕрне тенинчен пуҫне урăхла чĕнмен мана... Халĕ епĕ те чипер куҫлă ҫынах пултăм. Хама ҫĕнĕрен ҫуралса ҫитĕннĕ ҫын пек шутлатăп ҫав вара. Тем таранах спаҫибă, Кришша. Сана та, Саҥук... Ырми-канми тăрăшатăр ҫав пирĕншĕн...

Саҥук. Еп мĕнех вара, Матĕрне аппа...

К р и ш ш а. Трахомран тасалса çитменнисем татах пур. Çавсене трахпункта çӳреттерме тăрăшас пулаť, Матёрне аппа...

М а т ё р н е. Вăй çитнĕ таран, Кришша... Чуна пама та хатĕр çав вара. Шел... радио тăрăх Мускавпа калаçма май çук. Хăйсем каланине итлетпĕр. Вара çав пире савăнăçлă пурнăç панă тăванăмăр Сталина хам чĕлхепех тавтăвăттăм...

С а ҥ у к. Есĕ çыру урлă тавту, Матёрне аппа.

М а т ё р н е. Тасах çырма вĕренеймерĕмçке çав вара... Ентĕ вĕренетĕп те-ха...

К р и ш ш а. Саҥук, çырса пар çырухе Матёрне аппана.

С а ҥ у к. Çырса паратăп, çырса паратăп...

М а т ё р н е. Иљуш патне те çырасчĕ çав вара. Ман куç тасалнине пĕлсен, мĕн тери савăнĕ-ши ман Иљуш!

К р и ш ш а. Кули савăнмĕ...

М а т ё р н е. Килте хут çукчĕ ман... Сан çук-и, Кришша? Пулсан пар-ха...

К р и ш ш а. Парас, Матёрне аппа, парас. (*Пĕр лист параť.*) Çитет-и?

М а т ё р н е. Тата пар, Кришша, çырмали нумай. Иљуш хăйĕн йулташĕсене вуласа кăтарттăр. Суккăр Матёрне куçлă пулнине пĕтĕм Хĕрлĕ çар пĕлтĕр çав вара...

К р и ш ш а. Парас, парас, Матёрне аппа.

Матĕрне. Хăйтавраннă тĕле чĕрĕ улма, помидор, хăйар усратăп. Пĕр сыснине ҫитерсе самăртатăп. Ҫавсем ҫинчен те ҫырса пĕлтересчĕ ҫав вара...

Кришша (*хут парса*). Ҫитет-и?

Матĕрне. Ҫитĕ. Чим-ха, Кришша, тата тепĕр листа пар. Ĕне илни ҫинчен пĕлтермеле ҫав вара... „Хутаҫ" Матĕрни ĕнелĕ пулнине Илђуш йулташĕсем те пĕлччĕр. Колхоз ҫĕнĕ пӳрт лартса пани ҫинчен те ҫырса пĕлтерес ҫав вара.

Кришша (*тата тепĕр лист парса*). Пурин ҫинчен те ҫыр, Матĕрне аппа. Ҫыр...

Сађук. Ку хут ҫине тем ҫырма та ҫитет ĕнтĕ...

Матĕрне. Ҫитмесен, татах килсе илĕпха ҫав вара...

Кришша. Йурать, йурать, Матĕрне аппа...

Матĕрне. Кришша, хисеплесе пырса ларха пĕре ман пата. Ĕҫмели те ҫимели те пур халĕ ĕнтĕ ман, ҫав вара...

Кришша. Хисеплесе чĕннĕшĕн тавах, Матĕрне аппа, анчах пыраймастăп. Ыран кăвакҫутлах тăмала...

Матĕрне. Ҫапла та ҫав вара... пыр-ха, пыр... Анук ăҫта тата?.. Иксĕр те пырăр.

Кришша. Пыраймастăп, Матĕрне аппа. Есĕ те выртса кан. Кунĕпе ĕҫлесе ывăнтăн пулĕ...

Матёрне. Шел... питех кăмăлпа чĕнетĕп çав вара...

Кришша. Тепĕр чухне, Матёрне аппа...

Матёрне. Пыраймасан, ним тума та çук... Урăхла каласа чĕнме пултараймастăп çав вара...

Саҥук. Аттă, Матёрне аппа, çыруне кĕçĕрех çырса паратăп.

Матёрне. Ырă каç пултăр. Шел, пымарăн... Сăри те пурччĕ, апат-çимĕçне те хатĕрленĕччĕ çав вара...

Кришша. Тепĕр чух пырăп. Чипер кайăр... (*Кришша Саҥукпа Матёрнене ăсатса кăларса йарать те радиона выҫаттарма пуçлать.*)

Радио. Партизаны. Йурă. Александров гармониленĕ. Йурласа параканĕ Чăваш патшалăх хорĕ.

По долинам и по взгорьям
Шла дивизия вперед,
Чтобы с бою взять Приморье—
Белой армии оплот.
Наливалися знамена
Кумачом последних ран.
Шли лихие эскадроны
Приамурских партизан.
Этих лет не смолкнет слава,
Не померкнет никогда.
Партизанские отряды
Занимали города.

Йурă Кришшан кăмăлне çĕкленипе, вăл та радио хыççăн йурлама пуçлаť. Шкапран хутпа чернил илсе сĕтел çине хураť.

И припомнятся не раз нам,
Как маячные огни,
Штурмовые ночи Спасска,
Волочаевские дни.

Разгромили атаманов,
Разогнали воевод
И на Тихом океане
Свой закончили поход.

Кришша *(радио чарăнсан, йуррăн вĕçне хăй тĕллĕн тепĕр хут йурласа тухаť)*:

И на Тихом океане
Свой закончили поход.

Темĕн çырма лараť. Пĕр сас та çук. Чылай вăхăт иртсен, сасартăк чўрече чăнкăртатса çĕмĕрлет, чўречерен пенĕ пысăк чул сĕтел урлă ывтăнса çĕре ўкет. Кришша, ура çине сиксе тăрса, ним тума аптăраса пăхса тăраť.

**Чаршав.**

## ВИҪҪЕМӖШ АКТ

Сценă—колхоз правленинче. Çтена çумĕнче плакатсем, портретсем, çтена хаçачĕ çакăнса тăни курăнать. Макçăм пĕчченех, сĕтел хушшинче ларать. Умĕнче шчут, кĕнекесем. Çыркаласа, шчутпа шутлакаласа ларать.

Кришша кĕрет.

Кришша. Çведĕнисене РИК-а йатăн-и?

Макçăм. Йараймарăм, Григори Петрович...

Кришша. Ирех йамала пулнă.

Макçăм. Ĕлкĕреймерĕм, Григори Петрович...

Кришша. Ĕлкĕрес пулать, Макçăм! Пирĕн ĕç ача вăййи мар... Ĕнер те вăхăтра йараймарăмăр.

Макçăм. Халĕ те çĕрне-кунне пĕлмесĕрех ĕçлетĕп, Григори Петрович... Канма та вăхăт çук...

Кришша. Тата тепĕр ĕçе вăхăтра туса памасан, пирĕн урăх счетовод тупмала пулать, Макçăм...

Макçăм. Ан хărат, Григори Петрович... Йалпа пĕрле уйри ĕçе те тума пултаратăп епĕ...

Уçăп кĕрет. Йанахĕ урлă тутăр çыхнă.

Уçăп. Ой-й!.. ой-й!..

Кришша. А-а... Мишуткин йулташ! Килех, килех... Мĕншĕн ĕçе тухмарăн пайан? Саншăн Микула охотник акса парать-и?

Макçăм. Конечнă ĕçрен пăрăнса çӳрени аван мар, Уçăп пичче... Ху пĕлмеле... Вăхăт—вут.

Уçăп. Разĕ çавна пĕлмен çын епĕ? Пĕлетĕп. Анчах мĕн тăвас тетĕр есĕр?.. Шăл туни тăпăлса тухать-и тен... Ой-й!.. Калаçма çук... Мăй таврашсем хăмпă пек шыçса тухрĕç.

Кришша. Салт-ха тутăрна, кăтарт!

Уçăп. Йурамасть, Григори Петрович... Тухтăр çыхса йанă, салтма хушмарĕ.

Кришша. Тухтăр хушмарĕ-и!?. (*Пĕр самантра Уçăп тутăрне сӳсе илет. Пичĕ шыçманнине курса.*) Мăй таврашсем шыçнă еппин!?.

Уçăп. Шалтан ыратать, Григори Петрович.... шалтан...

Кришша. Ĕнер, кăшкăрса, тырă акассине чарма тăрăшнă чухне ыратмарĕ-и!?.

Макçăм. Аван мар, аван мар, Уçăп пичче...

Кришша. Çапла, Мишуткин йулташ: колхоза кайала туртакансене колхозран кăлараççĕ...

Уçăп. Мана!?. Беднјака-и!?.

Кришша. Халĕ... кайма та пултаратăн.

Уçăп. Кайатăп, кайатăп... Йу-урĕ, Григори Петрович... *(Тухса кайат.)*

Кришша. Енер, кăнтăрла иртсен, ĕçе тухман. Виçĕмкун, парник вађђи хăма илме йарсан, çĕтрĕ...

Макçăм. Уçăп пеккисем, конечнă, колхоз йатне çĕртсе пурăнаççĕ кăна....

Кришша. Енерхипе пайан кăнтăрлаччен акнине те çыр. Планпа шутланинчен тулă вунпилĕк га, сĕлĕ çирĕм пĕр га акрăмăр. Клас тăшманĕсем мăнкун ернипе усă курасшăн пулни çинчен те çырас.

Макçăм. Аплапулсан, тулă вăтăр пилĕк га?..

Кришша. Сĕлĕ аллă га пулат. Çырса пĕтер те, часрах РИК-а леçтерес...

Макçăм. Йурат, йурат, Григори Петрович...

Петă керет.

Кришша. Çĕр валеççе пĕтертĕр-и?..

Петă. Пĕтрĕ. Ывăнтăм вара пайан... Сăнчăр туртасшăн мар, мур илесшĕсем!

Кришша. Пĕтнĕ-тĕк аван, ыран суха патне кăларатпăр.

П е ť ă. Шупашкартан килнĕ артиссем спектаклљ лартма хатĕрленеççĕ. Санпа курса калаçасшăн вĕсем, Кришша...

К р и ш ш а. Кайăпăр. Макçăм, милици килес пулсан, пĕлтер есĕ мана. Аťа, Пеťă...

М а к ç ă м. Пĕлтерĕп, Григори Петрович...

Кришшапа Пеťă тухса кайаççĕ. Макçăм сĕтел хушшинче васкаса шчутпа шутласа йулаť. Тăвăлланса, кĕнеке ăшĕнчи хутсене илсе чĕркелесе пăрахаť. Таťйана кĕрет. Аллинче пĕр тĕрке çитцă пур. Пысăк пакетпа сахăр йăтнă.

Т а ť й а н а (*васкаса*). Макçăм, укçа çук-и сан? Пар-ха часрах! Киле кайса килме инçе, тепĕр кило сахăр илесчĕ. Атту илсе пĕтерĕç...

М а к ç ă м. Çук, инке. Пулсан, конечнă, парăттăм...

Т а ť й а н а. Ах-ти!.. сăра тутлантарма кирлĕччĕ. Ратнене пухса ĕçкĕ тăвас теттĕм... Чăнах, пулсан—пар-ха...

М а к ç ă м. Çук терĕм-иç!

Т а ť й а н а. Çук-тăк, мĕн тăвас тен... Мĕн пуррипе çитĕ. Ачасем ваљљи кĕпелĕх те пулчĕ...

М а к ç ă м. Ратнепе ĕçке тухасси тухăр та... Каллех хура хăма çине ӳкесрен хăрамасна?

Т а ť й а н а. Хура хăма çине?.. Хăçан ӳкернĕ мана?..

М а к ç ă м. Веç... çтена хаçатне вуласа пăх...

Таҫ̆йана. Ăҫта? (*Пăхкаласа*). Ху вуласа пар-ха, Максăм... Мĕнле ҫырнă?..

Максăм. Конечнă, начар ĕҫленĕ тесе...

Таҫ̆йана. Кам? Епĕ начар ĕҫленĕ-и?! Епĕ пайан та тăвата пин тĕп помидор кăларса лартнă... Шӳт тăватăн-и есĕ?..

Максăм. Конечнă, шӳт туса мар... Аллă проччăн трудоденне чакарни ҫинчен ҫырни те пур.

Таҫ̆йана. Аллă проччăн?!. Пилĕк трудодень терĕн-и-ха ҫав малтанхи, тата аллă проччăн-и!.. Ай тур-тур... пĕтрĕмҫке!.. Мĕн тăвас?.. Кришшах пĕтерет ĕнтĕ... Чӳречине персе ватнă... Хăйне ма пуҫĕнчен лектермен-ши?..

Максăм. Ытлашши калаҫатăн, инке!

Таҫ̆йана. Ытлашши?!. Хăрамастăп! Кайса хупчăр! Хăрамастăп!..

Саӈук кĕрет.

Саӈук. Мĕн пулнă? Мĕн шавлатăр есĕр?..

Таҫ̆йана. Мĕнле хăйатăр есĕр мана хура хăма ҫине ӳкерме?.. Кам пур ман пек ĕҫлекенни, кам? Кала, кам?.. Епĕ пайан та тăвата пин тĕп помидор кăларса лартнă...

Саӈук. Кайса пăх-ха, тăвата пинрен миҫе тĕп чĕрĕлнĕ?.. Аллă проччăн мар, помидор тĕпне сайа йанине те шыраса илмеле санран...

Таҫ̆йана. Чыхăр ҫын ĕҫленине!.. Чыхăр! Сире нумай кирлĕ... (*Йатлаҫса тухса кайаҫ̆.*)

С а ҥ у к. Тӗлӗнмеле ку Таҫҫанаран, тымарне татса ан тӑпӑлтар тесе мӗн чухлӗ каларӑм... Кайран хӑйех йатлаҫаҫ...

М а к ҫ ӑ м. Социалисӑм тӑвасси ҫӑмӑл ӗҫ мар, Саҥук... Епӗ хам икӗ ҫул Хӗрлӗ ҫарта пулнӑ... Пӗтӗмпех пӗлетӗп.

С а ҥ у к (*сӗтел ҫине хутсем кӑларса хурса*). Ача, ҫак нарйадсем ҫинчен тӗп кӗнеке ҫине ӳкерсе ҫыр-ха. Пайан иккӗмӗш бригадӑран иртсе карӑмӑр. Ну, тапаланчӗҫ! Ҫитеймерӗҫ пире ҫапах...

М а к ҫ ӑ м. Конечнӑ, ҫыратӑп. Комсомол бригади мала тухни савӑнтараҫ мана. Анчах лар-ха есӗ, Саҥук... Ӗнертенпе курнӑҫман иксӗмӗр...

С а ҥ у к. Ман васкамала, ача... Ыран ваҙҙи вӑрлӑхсем хатӗрлесе ҫитерес пулаҫ.

М а к ҫ ӑ м. Пӗр-икӗ сӑмах ҫеҫ калаҫса илетпӗр, Саҥук. Лар-ха...

С а ҥ у к. Тепӗр чухне, Макҫӑм...

М а к ҫ ӑ м. Каҫ та улталарӑн... Кӗтрӗм-кӗтрӗм, тухмарӑн...

С а ҥ у к. Улталаса мар, ӗҫ пулчӗ. Кришша патӗнче нумайччен калаҫса лартӑмӑр.

М а к ҫ ӑ м. Мӗн ҫинчен калаҫрӑр?..

С а ҥ у к Так, тырӑ акса пӗтересси ҫинчен калаҫса лартӑмӑр... Вара есӗ киле кайнӑ пулӗ тесе, кӗрсе ҫывӑртӑм.

М а к ҫ ӑ м. Шӑп тул ҫутӑличчен кӗтрӗм, Саҥук. Сансӑр пуҫне пӗр минут та пурӑнас

килмест ман... Ан чăс, Саҥук, кала татса... Ответ пар... Мĕншĕн нимĕн те шарламастăн?..

Саҥук. Тем... хам тĕллĕн шухăша каймарăм-и, ача...

Макçăм. Мĕн шухăшĕ-ши? Пĕлейресчĕ...

Саҥук. Анукпа Кришша йĕкĕр мăйăр пек пурăнаҫчĕç... Кам шухăшланă вĕсем уйăрласçĕ тесе?.. Ытла та айван çав Анук. Криштшаран лайăх çын ăçта тупĕ ши?..

Макçăм. Пирĕн пурнăç вĕсенни пек пулмĕ, Саҥук... Есĕ урăх сăмах çине ан куç-ха. Тен, пайан илнĕ çыру шухăшлаттараҫ пу҆ сана?..

Саҥук. Есĕ ха҆ те манман-и ăна?

Макçăм. Сана йуратмастăп пулсан, манăттăм-и тен... Сансăр пуçне пурнăç çук ман, Саҥук...

Саҥук. Çырушăн пулсан, кăмăлна ан хуç. И҆уш комсомол йачейкине йанă çыру вăл. Пирĕн кучченеççене илнине пĕлтерсе çыраҫ. Питшăллисемпе хĕрлĕ кĕтесе илемлетнĕ, тет те, пурте пăхса савăнаççĕ, тесе çырнă. Ĕненетĕн-и ĕнтĕ?..

Макçăм. Ĕненетĕп, Саҥук, ĕненетĕп... (*Саҥука тытма хăтланаҫ.*)

Саҥук (*пăрăнса*). Ĕç пĕтсен, урама тухатпăр вĕт, ача?..

Макçăм. Тухатпăр, тухатпăр... (*Саҥук хăвăрт тухса кайаҫ*). Кайах! Пурпĕрех çакланăн-ха ман алла...

Макçăм сĕтел çинчи хутсене илсе вулаŷ, шутласа кĕнеке çине çыраŷ. Сыхлансарах У ç ă п кĕрет. Йанахĕ урлă тутăр çыхнă.

У ç ă п. Карĕç-и?..

М а к ç ă м. Никам та çук.

У ç ă п. Епĕ татах кам та пулин çук-ши тесе сыхланса кĕретĕп...

М а к ç ă м. Хăш вăхăтра çӳремелине чухлаймастăн, Уçăп пичче...

У ç ă п. Кришша пуррине кĕтмен епĕ...

М а к ç ă м. Кала часрах, мĕн хыпар илсе килтĕн?..

У ç ă п. Сывлăш çавăрса йарам... Чупса ывăнтăм...

М а к ç ă м. Кам ывăнман?.. Часрах кала! Хам пӳртре хам хуçа мар... Çиллĕме ăша йарса тӳсни йăлăхтарчĕ... Акма чараннăскерсене салатса йараймарăн... Начар ĕçлетĕн!

У ç ă п. Питех тăвăлланмали çук... Милици килет.

М а к ç ă м. Килет-и? Кам?...

У ç ă п. Уçланкин. Епĕ тӳр сукмакпа мала тухрăм...

М а к ç ă м. Аван. Ман пурте хатĕр. Кришша пĕлесрен сыхланас пулаŷ. Вăхăт кĕске... Пайан сана, ыран мана та шанми пулĕç... Пĕр кун йулса акни те сийен кӳрет. Мăнкун праçникĕ ернипе тăсăлаŷ, Уçăп пичче... Ернерен тăпра та чул пулма пултараŷ. Чул çине акса нумайах тырă туса илеймĕç...

У ç ă п. Ăнланатăп, Макçăм, ăнланатăп...

М а к ç ă м. Леш, комсомол йачейкин çекретарě—Саңук мана йуратаť пулас-ха... Ăна качча илсен, пěтěм ěç хамăр алла кěрсе ўкě, Уçăп пичче!

У ç ă п. Тăс-с-с... Такам килет...

М а к ç ă м. Лăплан, мěн кушак пек пěтěрěнетěн?!.

У ç л а н к и н кěрет. Аллинче портфěл.

У ç л а н к и н. Здраçтě!

М а к ç ă м. Килěрех, йулташ Уçланкин! (*Ал пырса тытаť*).

У ç ă п. Пирěн колхозра хисеплě хăна пулăр.

У ç л а н к и н. Фу! йăлтах ывăнтăм... Милиционера кěни раштавра çулталăк çитет, канса кураймарăм. Ăна тумала, кăна йěркелемеле... Упăшкипе арăмě уйăрлаççě—есě кай. Алимент шырама—Уçланкин кай. Чўречене персе ватсан—каллех мана хăвалаççě. Çитменнине васкатаççě-ха... Чўрече мěнехши вăл? Колхоз пурлăхне вăрлакансене тытма тесен, пархатарлă ěçчě хуť... Сире мěн мар пěр вырăнта ěçлесе ларма! Ман вырăнта пулса пăхасчě сирěн...

М а к ç ă м. Мěн каласси пур вара! Конечнă, милицинче ěçлеме йăвăр... Çавăншăн ěçě те хисеплě.

Уçăп. Кашни çынах пултарас çук сан ĕçре, йулташ Уçланкин...

Уçланкин. Факт, анчах ман пайан важнă делăпа киле çитмелеччĕ. Председатĕле кайса чĕнĕр-ха часрах. Ĕçе часрах туса пĕтерес. Килте мунча хутнăччĕ...

Максăм. Темĕçпеччĕ, йулташ Уçланкин?..

Уçланкин. Председатĕл чӳречине кам персе ватнă? Есĕр илтмен-и?

Уçăп. Кĕркури Петрович чӳречине-и?..

Уçланкин. Факт.

Уçăп. Калама хăрушă, йулташ Уçланкин...

Уçланкин. Есĕр пĕлетĕр-им?

Уçăп. Кам пĕлмест,йалĕпе пĕлеççĕ...

Уçланкин. Калатăп вĕт, тупатăп тесе...

Уçăп. Калама чĕлхе çаврăнмасть, йулташ Уçланкин... Пире йăлтах хăратса пĕтернĕ ĕнтĕ колхозра...

Уçланкин. Хăратса пĕтернĕ? Кам?..

Уçăп. Акă пăх, хама хĕнесе пĕтерчĕ...

Уçланкин. Факт. Кам хĕнерĕ?

Уçăп. Аллă тенкĕ укçа илмели пурччĕ Кĕркури Петровичран... Ыйтма тесе карăм та, хĕнесе пĕтерчĕ... Кайран хăй чӳречине хăйех çапса çĕмĕрчĕ...

Уçланкин. Как? Как? Йăнăшмастăр-и есĕр?.. Мĕн сăлтавпа хăй чӳречине хăйех çапса çĕмĕрнĕ вăл?..

Максăм. Тĕрĕсех, йулташ Уçланкин. Чӳрече ватсан, кулаксем тапăннă пулатьçке...

Герой пулас килет! Чапа тухасшăн... Иртнĕ каç арăмне те килтен хăваласа йанă вăл... Пире ĕненмесен, арăмне хăйне чĕнтерсе ыйтса пĕлме пултаратăр...

Уçланкин. Ах, вон мĕн! Апла çын иккен вăл!?. Милицине кĕни раштавра çулталăк çитет... Ку таринччен тавçăрса илеймен ĕç пулман ман. Активиссене чăнах та кулаксем тапăнаканччĕ... Акă чейе çын ăçта вăл!?. Çĕнĕ ĕç, çавăнпа малтанах чухлаймарăм епĕ. Епĕ çеç мар, кирек-кам пулсан та тавçăрса илес çукчĕ ку ĕçе...

Уçăп. Хирĕç сăмах калама çук, колхозран кăларассипе хăрататĕ...

Макçăм. Активиссене çăвар уçма памасĕ... Акă, Татйана Ивановăран ыйтăр есĕр, ун пек лайăх ĕçлекен хĕрарăм пирĕн колхозра урăх никам та çук...

Уçăп. Разĕ коммунис тесе вара, тем тусан та ответ тыттармала мар-и ăна? Мăшкăл вĕт, йулташ Уçланкин! Йепле тÿсес ку мăшкăла?..

Уçланкин. Тĕрĕсех, йулташсем, саккун никама та йĕркесĕр ĕçсем тума хушмасĕ. Анчах есĕр фактсем ытларах тупса парăр... Ахаллĕн ĕненме çук.

Макçăм. Фактсем тем чул та, йулташ Уçланкин... Акă, пăхăр-ха, ку ведăмăçа куратăр-и?

Уçланкин. Факт.

Максăм. Ултă çĕр тенкĕ приходра пур, расход туни çук. Ăна та хăй кăсйине чикнĕ. Çапла вăрласан мĕнле социалисăм пултăр?..

Уçланкин. Факт. Вот негоднăй! Чӳречене ватрĕç, тесе çӳрет...(*Уçăпа.*) Есĕ кайса чĕн-ха часрах свидетĕлсене.

Уçăп. Халех, йулташ Уçланкин!.. (*Васкаса тухса кайат.*)

Уçланкин. Тавай, протокол çырар, йулташ... (*Хут çине çырма хатĕрленет.*) Мĕн йатлăччĕ-ха есĕр?

Максăм. Максăм.

Уçланкин. Аçу йачĕ?

Максăм. Михайлович.

Уçланкин. Хушамат?

Максăм. Колпаков.

Уçланкин. Как? Как?..

Максăм. Ко-олпа·аков.

Уçланкин. Факт. Анчах кĕскерех кала есĕ... Мунча сивĕнесрен хăратăп...

Максăм. Йурат, йурат, йулташ Уçланкин...

Уçланкин. Миçе çулта!

Максăм. Çирĕм улттăра... Икĕ çул Хĕрлĕ çарта пулнă.

Уçланкин. Та-ак... Партинче тăратăн-и?

Максăм. Конечнă, беспартийнăй...

Уçланкин. Факт. Епĕ хам милицине кĕни раштавра çулталăк çитет, партине кĕмен-ха...

Максăм. Зайавлени пама шутлатăп.

Уçланкин. Та-ак... Социаљнăй положени?

Максăм. Конечнă, самăй бедњак. Çири çĕтĕк шинелтен пуçне урăх нимĕн те çук ман...

Уçланкин. Факт. Сутпа айăпланнă-и?

Максăм. Мĕнлеçын тесе шутлатăр есĕр мана, йулташ Уçланкин?..

Уçланкин. Факт. Григори Петров тăван тивмест-и сире?..

Максăм. Конечнă, çук.

Уçланкин. Та-а-ак... Ку ĕçпе тата мĕн хушса калама пултаратăн?

Максăм. Конечнă, хам каланисене тĕрĕс тесе ал пусма пултаратăп...

Уçланкин. Та-а-к...

Максăм. Правленин хĕлле пĕрене турттарнăшăн илнĕ укçа пулнă...

Уçланкин. Факт...

Максăм. Кассă кĕнеки çине кĕртмен...

Уçланкин. Пĕрене турттарнă укçа-и, мĕн-и,—тĕрĕслесе тухăп... Ку хутне мана парса йар-ха есĕ.

Максăм. Конечнă... Сирĕн ваљљийех хатĕрленĕ епĕ... (*Кĕнеке ăшĕнчен çурса илсе Уçланкина парат.*)

Уçланкин. Мĕн çăва тума час килеймерĕç çавсем? Арăм кĕтсе ыванчĕ пулĕ... Хурăн милĕк тупайрĕ-ши?..

Максăм. Халех çитĕç, йулташ Уçланкин. Тата çакна каласшăнччĕ епĕ...

Уçланкин. Кала, кала...

Максăм. Пытарма çук, йулташ Уçланкин. Григори Петрович, конечнă, тăрăшса ĕçлекен çын... Хам та хисеплетĕп...

Уçланкин. Факт. Кĕскерех кала есĕ...

Максăм. Питĕ ĕçме йуратаť тата...

Уçланкин. Факт.

Максăм. Тĕрĕссипе каласан, йалта первăй кулак пулнă...

Уçланкин. Кула-ак?!. Ку факт мар. Петровсем кулак пулнине илтмен епĕ...

Максăм. Ĕлĕк йăвăçпа сутă тунă...

Уçланкин. Возможнă... Вçотки кăна та протокол çине кĕртес...

Максăм. Партине кĕнĕ те... Конечнă, калама хăраса пурăнаççĕ...

Уçланкин. Возможнă... тата мĕн пĕлетĕн?

Максăм. Урăх нимĕн те калама пултараймастăп...

Уçланкин. Факт... Ал пус.

Максăм. Фактсем çителĕклĕ патăм... Ман шутпа ал пусмасан та йурамала пек, йулташ Уçланкин?..

Уçланкин. Как? Как?... Ал пус. Закон тĕрĕслĕхе йуратаť.

Максăм. Çаплах пулĕ те, йулташ Уçланкин... Григори Петрович пĕлесрен хăратăп...

Уçланкин. Хăрас пулсан мĕншĕн каларăн? Ал пус.

Максăм. Пусатăп, пусатăп, йулташ Уçланкин... Социалисăм интересĕшĕн... (*Ал пусат.*)

Уçланкин. Факт. Капла законнăй протокол пулчĕ ĕнтĕ...

Татйана кĕрет.

Максăм. Йулташ Уçланкин, Татйана Ивановнă килчĕ...

Уçланкин. Так-так.. Ну-кă, инке, каласа пар, Григори Петров çинчен мĕн пĕлетĕн есĕ?

Татйана. Кришша çинчен-и?

Уçланкин. Факт.

Татйана. Тем те пĕлетĕп... Кришшаран усал çын çук...

Уçланкин. Так... так...

Татйана. Лайăх ĕçлекенех штраф тăват. Калама çук усал... Каç, хăй патне кайсан, тĕксе чикелентерсе кăларса йачĕ. Çирĕм çул пурăнса хам арçынран çимен патака çирĕм... Мĕнле çапла колхоз пулат вăл, е?..

Уçланкин. Та-ак... Интереслă факт.

Татйана. Мана çеç-и? Арăмне те килĕнчен хăваласа кăларса йанă...

Уçланкин. Так... та-ак...

Татйана. Тўсме çук... Кун пекех пулсан, колхозран та тухма шухăш пур...

Уҫланкин. Ҫук, ҫук, инке, колхозран тухма кирлӗ мар. Ӗҫе хамӑрах майлаштарӑпӑр—тата мӗн пӗлетӗн?

Татйана. Урӑх мӗн?..

Уҫӑп (*алӑкран уҫса пӑхса*). Кӗме йурат-и?

Уҫланкин. Факт... Пӑртак кӗтӗр-ха.

Уҫӑп. Кӗтетпӗр, кӗтетпӗр... (*Кайала тухат.*)

Уҫланкин. Ал пус.

Татйана. Максӑм, маншӑн есӗ ал пусха...

Максӑм. Конечнӑ, инке... (*Ал пусат.*)

Татйана. Кайма йурат-и?

Уҫланкин Факт.

Татйана. Ман пата кӗрсе тухмӑр-ши, йулташ Уҫланкин? Хӑнасем пуҫтарӑннӑччӗ...

Уҫланкин. Вӑхӑт ҫук. Арӑм кӗтсе ывӑнчӗ пулӗ...

Татйана. Ну, ан йатлаҫса йулӑр еппин... (*Тухса кайат.*)

Уҫланкин. Кала, кам килнӗ ҫавӑнта?

Максӑм. Халех, йулташ Уҫланкин... (*Васкаса пырса алӑка уҫат.*) Кӗрӗр!.

Уҫӑп, Анук тата Укҫине кӗреҫҫӗ.

Максӑм. Кришша арӑмӗ—Аннӑ Петровнӑ килчӗ, йулташ Уҫланкин.

Уҫланкин. Так... так...

Уҫӑп. Маларах иртӗр...

Укçине. Епĕ те килтĕм...
Уçланкин. Есĕ кам пулатăн?
Укçине. Анук ман хĕр пулаť...
Уçланкин. Та-ак...
Укçине. Çамрăкăн чĕлхе çыхланаť унăн...
Уçланкин. Факт.
Укçине. Çавăнпа хам та килес терĕм...
Уçланкин. Та-ак, килĕр-ха кунтарах.
Уçăп. Пырăр, пырăр...
Уçланкин (*Анукпа Укçине хăй патнерех пырсан.*) Ку ĕçпе есĕр мĕн пĕлетĕр? Тĕрĕссипе калăр.
Укçине. Тамаша! Каламасăр, ма каламастпăр...
Уçланкин. Та-ак... Аннă Петровнă.
Анук. Епĕ.
Уçланкин. Григори сана мĕнле хăваласа кăларса йачĕ, каласа пар-ха.
Анук. Хăваласси-мĕнни...
Укçине (*Анука пўлсе*). Тамаша! Хăваласси-мĕнни тесе тăраť тата! Хăйне пĕр йапаласăр кăларса йанă...
Уçланкин. Та-ак...
Укçине. Хам каласа парам.
Уçланкин. Кала, кала...
Укçине. Пирĕн кĕрў çын йеверлĕ мар вăл... Çĕр хута йал тăрăх чупса çўрет. Киле килсен, йатлаçаť... Тўснĕ ман хĕр нуштине... Ей... пўлĕхçĕ-ĕм...
Уçланкин. Факт...

Анук. Качча тухнăранпа Кришшапа лăпкă пурăнса ҫураймарăм ҫав епĕ...

Уҫланкин. Так... так...

Укҫине. Тем пулсан та, ман кĕрӳ председатĕл пулмали ҫын мар...

Анук. Кăларăр ăна председателтен...

Укҫине. Ҫапла кала ҫав, хĕрĕм, ҫапла кала...

Уҫланкин. Чӳрече кантăкне мĕнле ҫапса ватрĕ вăл?

Укҫине. Ă-ă... пуҫсĕр ҫыннăн кантăка ватасси те пулĕ... Тем тума та пултарĕ...

Уҫланкин. Факт.

Уҫăп. Татăклăрах кала есĕ, Укҫине...

Укҫине. Тамаша! хаљ те каларăм-иҫ...

Уҫланкин. Ал пусăр...

Укҫине. Йата ҫырма пĕлĕпĕрҫке ăна... (*Анукпа иккĕшĕ те ал пусаҫҫĕ.*)

Уҫланкин. Халĕ кайма пултаратăр.

Анук. Йулташ милици, тархасшăн Кришшана председателтен кăларăрччĕ...

Уҫланкин. Факт.

Макҫăм. Конечнă, кăлараҫҫĕ...

Укҫине. Тавах ырă сăмахна, ачам... (*Тухса кайаҫҫĕ.*)

Уҫăп. Куртăр-и ĕнтĕ, йулташ Уҫланкин: разĕ ҫав ҫын колхоз председателĕ пулма пултарать? Мана, самăй бедњака, правленирен хăваласа кăларса йачĕ. Ырантан колхозра пулмастăн, терĕ...

Макçăм. Есĕр закон çынни, йулташ Уçланкин... Социалисăм интересĕшĕн...

Уçланкин. Факт, йулташсем. Ĕçе хамăрах майлаштарăпăр. Сана та колхозран кăлармаççĕ. Пурăнăр, ĕçлĕр...

Кришша, Петĕ тата Саҥук кĕреççĕ.

Кришша. Йулташ Уçланкин! Есĕр килнĕ те-иç?..

Уçланкин (*хучĕсене пуçтарса*). Пришо-ол?!.

Кришша. Лайăх пурнатăр-и? (*Ал парат.*)

Уçланкин. Здраçтĕ! Ничево...

Кришша. Ман ĕçпе-и есĕр, йулташ Уçланкин?

Уçланкин. Факт. Герой пулма шутларăн-и?!.

Кришша. Мĕнле герой?..

Уçланкин. Мана улталаймăн!

Кришша. Йулташ Уçланкин, есĕр йĕркелĕрех калаçма тăрăшăр. Кала, мĕн улталанă епĕ?..

Уçланкин. Пĕтĕм район умĕнче тăрă шыв çине кăларсан, мĕнне хăвах пĕлĕн. Çак хутпа управленние пыр. Сывă пулăр!

Уçăп. Чипер кай, йулташ Уçланкин... (*Уçланкинпа пĕрле тухса кайат.*)

Петĕ. Мĕн хучĕ вăл, Кришша?

Кришша. Сегодня явиться в управление милиции...

С а ҫ у к. Мӗн ӗҫпе?...

К р и ш ш а. Хам та ӑнланмарӑм-ха... Епӗ чӳрече ватни ҫинчен йӗрлеме ыйтнӑччӗ. Хаҫ мана хама милицийе чӗнеҫҫӗ... Темскер, такам тем тӑватӑ-и тен ман тавра?.. Пӗлес пулаӑ. Хӑйсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларас пулаӑ. Есӗр пӑртак канҫанах акма тухӑр. Епӗ халех района кайатӑп... Ну, вӗҫтертӗм епӗ... (*Тухса кайаӑ.*)

С а ҫ у к. Макҫӑм, ес мӗн те пулин пӗлетӗн-и?

М а к ҫ ӑ м. Нимӗн те пӗлместӗп, Саҫук...

**Ч а р ш а в.**

## ТĂВАТТĂМĔШ АКТ

Сценă çинче униче карти. Шал йенче тырă амбарĕсем курăнаççĕ. Йала кĕрекен уй хапхи пур. Тĕттĕм каç. Малтанах сценă çинче никам та çук. Йалта йурланă сасăсем, хуткупăс каланă сасă, радио тăрăх илтĕнекен савăнăçлă сасăсем пĕр-пĕринпе хутшăнса кайса сĕрлесе тăраççĕ. Йалтан П а ђ у к п а а р ă м ĕ ыткăнса тухаççĕ. Пађук витрепе сăра йатнă. Арăмĕ, Ваçухха, тутăрпа кучченеç çĕкленĕ. Иккĕшĕ те ӳсĕр. Йурлаççĕ.

Чейе çынна—чей курки,
Тăмсай çынна—тăм курки.
Пире—йурĕ алтăр та,
Сăри пултăр çăрарах.

Уй хапхинчен Т а т̆ й а н а васкаса кĕрет

В а ç у х х а. Тавсйе, Тат̆йана!
Т а т̆ й а н а. Тавах... Есĕр ăçтала кайатăр?
В а ç у х х а. Аттесем патне кайма тухрăмăр.
П а ђ у к. Колхоза кĕриччен ĕçсе йулас, йакуђă-вађă...
Т а т̆ й а н а. Епĕ те пиччесене кайса чĕнтĕм-ха. Лашасăрах кайатăрçке есĕр?

Васуххa. Инçе мар терĕмĕр те, çулĕ такăр...

Пађук. Ман лаша колхозăн мар, хамăн, йакуђă-вађă...

Тайана. Пире те кайала тавăрса параç-çĕ пулĕ те-ха... Кришшана илсе кайнă ĕнтĕ...

Васуххa. Ара, мĕншĕн тытса кайнă çавна?..

Пађук. Мĕншĕн? Уçăп калаŏ:—совет хушнă пек ĕçлемен Кришша, тет, йакуђă-вађă...

Тайана. Колхоз укçине те вăрланă вăл... Мана та хĕнерĕ... Анука та килĕнчен хăва-ланă.. Пуриншĕн те айăплĕç-ха акă...

Пађук. Пĕтĕм йала тыткалама хăтла-наŏчĕ, йакуђă вађă... Йал аслă вăл, тыткалай-măн?

Васуххa. Кайар, Пађук.. Кĕтсе ыван-чĕç пуђ... Çитес çĕре çитмелех.

Тайана. Чипер ĕçсе килĕр!

Тайана йалала кĕрсе кайаŏ. Пађукпа арăмĕ, уй хапхинчен тухса кайсан, йурлама пуçлаççĕ:

Аŏа, карчăк, ĕçке кайар.
Чим-ха, старик, ача чĕркем.
Ес ачине чĕрке-ха,
Еп чĕлĕме чĕртем-ха...

Хăйсем курăнми пулсан, сассисем те илтĕнми пулаççĕ. Йалта çаплах шав илтĕнет. Инçетренех Çитăр йурăпа ăнтрашкаласа килет. Ŏсĕр. Малтанхи тумĕпех. Пăшалĕ те пур.

Ç и т ă р (*йурлама чарăнса*). Тпру у!.. Паљук кум!.. Тавсйе!.. Акă çана Кришша... Макçăм—Кришша мар! мар! Ěçтерет... Хăна та тăвать... Кар-чăк!.. Хик... Тăр-р.. Епě сана ак!.. (*Пăшалěнчен перет. Ахалех кулса йарать. Йурăпа ăнтрашкаласа амбар пусми патнеле пырать. Пусма тăрăх амбар умне хăпарма тăрăшать. Хăпараймасть. Пăшалě аллинчен тухса ÿкет. Хăй те амбар умнех тăсăлса выртать.*) Ша-а-а... (*Лăпланать.*)

Пусăран пěр ушкăн çамрăксем, хуткупăспа йурласа, тырă акнă çěртен таврăнаççě.

Савăнсах пайан ěçлерěм
Еп колхозăн хирěнче, хирěнче.
Ех, мěн чухлě çěнě йурă
Еп вěрентěм вěсенчен, вěсенчен...

М а т ě р н е тата 5—6 çын хиртен тырă акса килеççě. Вěсен хушшинче А н у к та пур.

А н у к. Кăлармěçех-ши вара Кришшана?..

1-м ě ш с а с ă. Темле çав ěнтě... Ултçěр тенкě укçа пытарнă, теççě те.

М а т ě р н е. Çынсем тем каласан та, ěненместěп епě. Кришша колхоз укçине пытармала çын мар. Санпа та йатлаçас килет ман, Анук. Мěн ăспа тухса кайнă çав вара есě Кришша патěнчен? Мěн çитмен сана?..

А н у к. Ытла та çын сăмаххине тӳсесси терěмçке, Матěрне аппа...

М а т ĕ р н е. Ей, ачам, аннў сăмахне сахалтарах итле есĕ. Тепĕр чухне епĕр, карчăксем, ухмахланатпăр мар-и çав вара...

А н у к. Таврăнмасан, Саӈукран ыйтса пĕлес те, ыран хамăн кайса килес пулӗ РИК-а...

М а т ĕ р н е. Кай, ачам, кай... Кĕçĕр таврăнмасан, епĕ те пырăп...

1-м ĕ ш с а с ă. Колхозĕпе кайатпăр.

М а т ĕ р н е. Йалĕпе ал пустарса кайатпăр.

1-м ĕ ш с а с ă. Ывăнтăм пайан... Акасса та каçа йуличченех акрăмăр та...

М а т ĕ р н е. Ывăнни нимех те мар. Акса пĕтересси паха çав вара. (*Иртсе кайаççĕ.*)

П е ť ă п а С а ӈ у к килеççĕ.

С а ӈ у к. Ну, райкомра тустарчĕç, ача! Тўсетĕн-тĕк тўс, тўсмесен, çавăнтах йĕрсе йар...

П е ť ă. Кришша хирĕç мĕн те пулин ответ парайраť-и?

С а ӈ у к. Мĕн калăн, ача... Тĕрĕсех йатлаççĕ вĕсем. Мĕн пăхнă есĕр, ăçта сирĕн класлă сисĕмлĕх, тесе тустараççĕ.

П е ť ă. Хамăр та çав! Пĕркунне райком çекретарĕ, йала килсен, Макçăм çинчен йатарласах хамăртан ыйтса лараť. Епĕр çине тăрса шантаратпăр. Ех-х!..

С а ӈ у к. Ашшĕнчен раскулачит тăвичченех уйрăлса, Хĕрлĕ çара кайса килнипе шантăмăрçке...

Петĕ. Ун чухнех маххă патăмăр çав. Йатлама мар пире, комсомолран та кăларса сирпĕтмеле...

Саньук. Райкомра çаплах каларĕç: колхоза мала кăларнипе кăна комсомолра йулма тивĕç пулăр, терĕç.

Петĕ. Тимлĕ ĕçлес пулаť çав. Пайан йединоличниксене пурне те сухана кăларайманни шухăшлаттараť тата... Паньук пичче ирпе чиперех тухнăччĕ хире, тепре çавранса пăхиччен кĕрсе те кайнă. Хăшĕ-пĕрисем пĕрре çавранаççĕ те ана пуçĕнче выртаççĕ... Кришша час тавранаť-и?..

Саньук. Банкран справкăсем илсе милицине кайса леçетĕп те тавранатăп, тесе йулчĕ манран.

Петĕ. Пыр та калаç! Йалта Кришшана хупса лартнă тесе çĕр çĕмĕрлет... Епĕ, паллах, ĕненмерĕм...

Саньук. Кришша киличчен никама та ан шарла. Хупнă-хупнах пултăр. Лешсене пĕтĕм колхозниксем умĕнче тăрă шыв çине кăларатпăр.

Петĕ. Тупнă есĕ, Саньук, савни...

Саньук. Ан калаç, ача... Шухăшласан, кăмăл хуçăлаť. Кам шухăшлама пултарнă?..

Петĕ. Тиркерĕн мана... Вăт сана Макçă-ăм!..

Саньук. Ача, амбарсем патĕнче Çитăр пичче хурал тăраť-ши пирĕн?.. Тĕрĕслер-ха.

Петĕ. Ăта... ăта... (*Амбарсем патне çывхарса кăшкăрат.*) Çитăр пичче!

Саньук. Мĕншĕн чĕнмест вăл, ача? Çывăрман пулĕçке...

Петĕ. Çитăр пичче!.. Çук, чĕнмест...

Саньук. Ăçта кайнă вăл, ача, ха!.. (*Амбарсем çывăхнех пыраççĕ*)

Петĕ. Çитăр пичче!..

Саньук. Ак йапала! Хуралçă хăй, хăйне шыраса тупаймастпăр... Килне кайман-ши?

Петĕ (*Çитăр выртнине тĕл пулса.*) Саньук!.. Акă кунта чăсăлса выртать... (*Сăхманĕнчен турткаласа.*) Çитăр пиче!.. Çитăр пичче! Ек-кей, е... Ӳсĕр-и ку-у?..

Саньук. Çитăр пичче, тăр!.. Çитăр пичче!..

Çитăр. Ша-а-а... (*Каллех лăпланса выртать.*)

Саньук. Усĕрçке ку, ача... Акă, пăшалĕ те кунта выртать... (*Пăшалне илет. Тĕрĕслесе пăхать.*) Аварламан... Ну-и хуралçă!

Петĕ. Вăт шуйттан!.. Йурать—тĕрĕслеме аса илтĕмĕр. Амбарсем хуралçăсăрах тăрса йулатчĕç-иç... Колхозран кăларса çапмала ун пек çынсене...

Саньук. Мĕн тăвăпăр, ача?.. Урăх никама та тăратма çук пуль кĕçĕр, акма тухнисем ывăннă... Ирччен хам тăрăп, ача... Есĕ... кайса çывăр.

Петĕ. Есĕ мĕн, мăшкăлатăн-и манран? Çук, хам тăратăп. Санăн ыран бригадăпа

ĕçлес пулаť. Кришша вырăнне те ĕçленĕ есĕ пайан... Района кайса килсе те ывăннă...

Саҫук. Сан тумтир çӳхе, Петĕ. Есĕ шăнма пултаран, ача...

Петĕ. Самант кайса улăштарса тăхăнма çук-и вара?..

Саҫук. Йураť еппин... Кайса тумланса кил, ача. Çĕр сивĕ...Пăшала та авăрлас пулаť... Завхоз патне те йăпăрт кĕрсе тух...

Петĕ. Йураť, Саҫук, халех! (*Кайма тăраť.*)

Саҫук (*Çитăр çине тĕллесе кăтартса*)· Çула май кĕрсе кала, илсе кайччăр ку сӳслен чĕке...

Петĕ. Йураť! (*Васкаса кайаť.*)

Саҫук. Ех, Çитăр пичче, Çитăр пичче!.. Ĕçеймесĕр тӳсеймерĕн пулаť ĕнтĕ... (*Çитăр патĕнчен, амбар çăраççине тĕрĕслесе, хыçалала утса кайаť.*)

Максăмпа Уçăп сыхланарах пыраççĕ.

Максăм. Саҫук та района кайнă... Пурте тăрă шыв çине тухма пултараť. Кĕçĕр йулашки тапкăç... Ыран Çитăра та ӳсĕртеймĕн...

Уçăп. Çаплине çаплах та... тем, çанçурăм сăрлатаť... Пĕлес тăвас пулсан—сăхсăх вара, Максăм!..

Максăм. Хăравçă! Йе ĕлĕк начар пурăннă есĕ? Кам пулнă йалта пуçлăх, есĕ мар-и?

Сирĕнтен йал чĕтресе пурăнман-и? Халĕ кама пăхăнан есĕ? Кам сан пуçу çине таптать?..

Уçăп. Вăл çаплах... Ĕлĕк пулсан, Кришша пеккисене чăмăрласа çеç кăтартнă пулăттăм... Халăх çинче çăвар уçма хăранă вĕсем...

Макçăм. Атте тахçанах тăпра пулнă. Анчах унăн йунĕ нихăçан та ман чĕрере тапма чарăнман. Ку амбарсем текех манăн пулас çук, савăнтарас çук сана та вĕсем, Уçăп пичче. Мăнкун пулăшаймарĕ... Ĕмĕрне те кайала чакмăп! Ыранхи куншăн, хĕвел ўпне çаврăнсан та, ўкĕнместĕп...

Уçăп. Çаплах та, Макçăм, урăхларах тусан авантарах пулмĕ-ши? Кришшана хупрĕçех пулсан, правленине хамăр алла çаврса илсен авантарах пулĕ... Пĕтĕм колхозне мăрйерен кăларăттăмăр. Кусенче мĕн, пĕрре акмалăх вăрлăх кăна... Шухăшла, Макçăм.

Макçăм. Кришшана чăнах хупнă пулсан, çапла пулĕччĕ те... Анчах суйа ку, Уçăп пичче... Ĕненместĕп... Уçланкин пек çатăлти милиционера управлени шанас çук... Аћа... кĕлпе акчăр пĕреххут! (*Васкаса амбар патнеле пыраççĕ.*)

Уçăп. (*Саћук кĕтесрен çаврăнса тухнине курать*). Чим халĕ, Макçăм... Такам пур мар-и унта?.. (*Хўтлĕхе тăраççĕ. Саћук кĕтесрен çаврăнса тухать.*)

Макçăм (*Çитăра асăрхаса*). Кунтах тĕшĕрĕлсе аннă лешĕ... Йатса хума кирлĕ

мар... Вил-ӳсĕрскер тырăпа пĕрлех кĕл пулĕ...

Уçăп. Саӊук мар-и çав?..

Максăм. Есĕ тăр-ха, Уçăп пичче... Пĕр сас та ан кăларнă пултăр. Епĕ пĕчченех майлаштаратăп... (*Хăйулăн Саӊук патнелле пырать.*)

Саӊук (*Максăма курса, палламасăр*). Стой! Кам çӳрет унта?.. (*Пăшалне ал вĕççĕн тытать.*)

Максăм (*кăмăллă пулма тăрăшса*). Епĕ, Саӊук...

Саӊук. Мĕн шыраса çӳретĕн есĕ кунта?..

Максăм. Хуралçă вырăнта-и тесе тĕрĕслеме тухрăм. Сана тĕл пуласса кĕтмен... Мĕн тăватăн есĕ кунта?

Саӊук. Хурал тăратăп. Ытла çывăха ан кил...

Максăм. Çитăр ăçта тата?

Саӊук. Авă, ним пĕлми ӳсĕр выртать...

Максăм. Ах, кайаннăй! Çапла хуралласан мĕнле социалисăм тăвăпăр! Ку амбарсенче колхозăн мĕнпур вăрлăхĕ выртать, а вăл... Есĕ, Саӊук, çĕрĕпех хурал тăрас тетĕн-и кунта? Шăнса кайăн капла есĕ...

Саӊук. Шăнма мар, кĕпе витĕр тар тапса тухнă ман...

Максăм. Апла пушшех шăнса пăсăлма пултаратăн есĕ, Саӊук. Чунран йуратнипе хĕрхенсе калатăп епĕ сана. Есĕ кай киле,

Саҥук... сан выранна епĕ йулăп... Кайса ҫывăр...

Саҥук. Ҫывăрасси тармĕ, Макҫăм. Хамах хураллатăп. Есĕ... кайах!

Макҫăм. Ну, пĕрле хурал тăрăпăр еппин. Ҫĕр иртни сисĕнмĕ. Йепле илемлĕ кĕҫĕрхи каҫ! Есĕ ман умра тăни пушшех те ҫутҫанталăка илемлетет. Кил-ха, йунашар лар...

Саҥук. Хуралта тăратăп епĕ...

Макҫăм. Халиччен курман пек турткаланса ан тăр ĕнтĕ, Саҥук. Иртнĕ каҫ ҫеҫ ĕмĕр пĕр-пĕринчен сивĕнес мар пек калаҫрăмăр. Пайан сан кăмăлу улшăнни палăрать. Чăнах, епĕ хĕрхенсе кăна каларăм, тĕрĕссипе хамăн пачах та сана киле йарас шухăш пулман... Ну, мĕнле, Кришша час таврăнать-и? .

Саҥук. Пĕлместĕп.

Макҫăм. Районта та пĕлеймерĕн-и?..

Саҥук. Пĕлме мар, кăтартмарĕҫ те...

Макҫăм. Неуштă Григори Петровича чăннипех хупнă? Ĕненес килмест ман...

Саҥук. Виҫĕ кунран сут пулать, терĕҫ. Кришша пысăк айăпа кĕнĕ пулмала...

Макҫăм. Кĕтмен, Саҥук. Кришша пек таса ҫын ҫук темелеччĕ. Шел... Мĕн тăвас тен, социалисăм тăвасси ҫăмăл ĕҫ мар...

Саҥук. Хаҫ такама председатĕле лартмала ĕнтĕ?..

Макҫăм. Ăнда... Кама лартмала?.. Сана лартмала, Саҥук! Санран тивĕҫли урăх кам пултăр?

Саҥук. Çук, Макçăм! Епĕр, комсомолĕц-сем, сана лартас терĕмĕр-ха...

Макçăм. Мана шаннăшăн тем тери хавас епĕ, Саҥук! Анчах, епĕ Кришшаран ытларах пĕлес пулсан та, мана председатĕл пулма йурамасть, ху пĕлен: кам ачи пулнăскер вăл, тесе, тăрăнма пултарĕç. .

Саҥук. Унçинчен ан та шухăшла, Макçăм. Есĕ аçунтан уйрăлнă, есĕ Хĕрлĕ çарта та пулнă...

Макçăм. Неуштă епĕ председатĕл пулма тивĕç çын пулăп, Саҥук?.. Ĕненес килмест. Мĕн тери иксĕмĕр савăнса ĕçлĕттĕмĕр! Епĕ председатĕл! Тĕрĕссипе каласан, Кришшана епĕ тăрă шыв çине кăларнă, Саҥук. Хăйне... çиленсе мар, социалисăм интересĕшĕн...

Саҥук. Апла иккен!..

Уçăп хўтлĕхрен тухса пырать.

Уçăп. Тĕрĕс, Саҥук! Çамрăк пулсан та, сан ăсна никамăн та çитес çук: Макçăмран лайăх çын тупас çук епĕр. Разĕ, Кришша председатĕл пулмали çын пулнă? Кришшан пўтсĕр ĕçĕсене палăртасшăн епĕ те тăрăшрăм, Саҥук... çаплах...

Саҥук. Пĕрле пулнă иккен!.. (*Макçăма.*) Епĕ сана пĕччен ĕçленĕ тесе...

Макçăм. Ăçта „пĕрле пулнă"?..

Саҥук. Ан çывхар! Перетĕп!..

Уçăп шăвăнса таратъ.

Макçăм. Хупла çăварна!..

Саҥук. Тепĕр утăм утсанах, перетĕп!..

Макçăм. Перетĕн еппин, йурăт!.. (*Пĕр самантра Саҥука йарса илсе, пăвма тытăнат.*) Хуп çăварна!..

Саҥук. Крау-ул!.. Петĕ-ă!.. (*Макçăм аллинчен çăлăнса тарат.*)

Макçăм (*пăшалпа пеме хăтланат*). Тараймăн!.. (*Пăшалĕ пеменнипе, пăшала çĕре çапса Саҥук хыçĕнчен чупат.*)

Кришша килни курăнат.

Саҥук. Кришша-а!..

Макçăм, Кришшана курсан, кайала чупат.

Петĕ (*Макçăма хирĕç тухса*). Ăçта таран?!. (*Иккĕшĕ тытăçса ӳкеççĕ.*)

Кришша хăвăрт чупса пырат. Макçăма йарса тытат.

Кришша. Сволăч!..

Саҥук. Бандит!

**Чаршав**.

## ПИЛЛЁКМЁШ АКТ

Сценă—уничере. Малта — çулçă сарнă йăвăçсем. Пĕр кĕтесре выставкă. Выставкăра симĕс калча кĕлтисем тăраççĕ. Кашни кĕлте çинчех хăш вăхăтра акнине, хăш колхозăн калчине палăртса çырса çапнă хутсем пур. Йунашарах колхозăн çулахи столовăйĕ: вăрăм сĕтелсем лараççĕ; сĕтелсем çинче тĕрлĕ апат-çимĕç, сăра. Пĕр сĕтелĕ çинче хуткупăс пур.

Анукпа Таттйана айаккала чĕвенсе пăхса тăраççĕ.

Сценă хыçĕнчи сасă. Епĕр кăçал колхоза сăтăр тума тăнă тăшмансене çапса çĕмĕрсе, çуракине, агротехникă хушнă пек, вăхăтра ирттертĕмĕр. Халь пирĕн çуртри калчисем нихăçан курманла йешĕрсе ўсеççĕ...

Анук. Итле, Таттйана... Йепле çивĕч те ăслă калаçат ман Кришша...

Таттйана. Ăслă та... хăвăр çаплах уйрăм пурăнатăр... (*Кулат.*)

Анук (*çиленсе*). Есĕ йатлаçман-и Кришшапа? Тĕксе чикелентерсе йачĕ тесе кам калана милицине? Пурте пĕлеççĕ вĕт халь...

Таттйана. Манăн хăт трудодень чакарнă тесе счетовод суйнипе пулчĕ... Ху... ху суйман-и?...

Анук. Ан сўпĕлтет... Итлеме чаратăн...

Сцена хыҫӗнчи саса. Йуратнӑ Сталин йулташ пире телейлӗ, савӑнӑҫлӑ та пуйан пурнӑҫ туса пачӗ. Ҫавӑнпа та епӗр Сталин йулташа пӗтӗм чӗререн тав тӑватпӑр. Сывӑ пултӑр пирӗн тӑвантан та тӑван аттемӗр— Сталин йулташ!

(*Вӑйлӑ, шавлӑн сасӑсем: Урра! Урра! Урра!*)

Петӑпа Саҥук алӑран алӑ тытса кӑмӑллӑн кулса килеҫҫӗ.

Петӑ. Сӑра парӑр-ха пире, ӑш хыпрӗ...

Татйана. Хӑна-и мӗн есӗр? Хӑвӑр тултарса ӗҫӗр...

Саҥук. Йурӗ, Татйана аппа. Сана хам тултарса парӑп, Петӑ.

Саҥук (*сӑра тултарса пырса*). Ӗҫ-ха, ача, Петӑ, сӑри ту-утлӑ...

Анук. Хӑйма пекех...

Петӑ (*сӑра ӗҫсен*). Пылпа тунӑскер, пыл тутийех калать ҫав...

Саҥук. Тата парас-и?

Петӑ. Пар-ха, Саҥук... (*Ҫав вӑхӑтра оркестр савӑнӑҫлӑ марш калама пуҫлать*) Вӑйӑсем пуҫланчӗҫ, Саҥук!.. (*Кайма пуҫтарӑнать*).

Саҥук. Тепрер курка ӗҫместӗн-и?..

П е т̆ ӑ. Кайран ĕçĕпĕр, ат̆а часрах...

С а ҥ у к. Пыратăп, пыратăп! (*Сăра тултарнă куркана сĕтел çине лартса, хăвăрт кайаççĕ.*)

Т а т̆ й а н а. Саҥук Пет̆ăна качча тухат̆, теççĕ, те чăнах?..

А н у к. Хаљ те мăшăрланнăпа пĕрех çӳреççĕ вĕсем...

Т а т̆ й а н а. Пăх-ха, Анук, ушкăнĕпе утма пуçларĕç...

Инçетре хуткупăспа параппан çапса калакан хавасл̆ кĕвĕ сасси илтĕнме пуçлат̆. Хуткупас, параппан сассисемпе харăс утса килекен ура сассисем те илтĕнеççĕ.

1-м ĕ ш с а с ă. Социалисăмла уй-хир паттăрĕсене хĕрӳлĕ салам! Урра!..

Х а р ă с к ă ш к ă р н ă с а с ă с е м. Урра! Урра! Урра!.. (*Каллех оркестр сасси, харăс утакан ура сассисем илтĕнеççĕ*).

2-м ĕ ш с а с ă. Сывă пултăр пирĕн колхозăн хисеплĕ праçникĕ! Урра!..

С а с ă с е м. Урра! Урра! Урра!..

1-м ĕ ш с а с ă. Сывă пултăр Чăваш коммуниссен организацийĕ!..

С а с ă с е м. Урра! Урра! Урра!.. (*Оркестрпа пионерсен параппанĕ сасси хутшăнат̆.*)

А н у к. Пăхсам, пăхсам, ара, Тат̆йана... пионерсем килеççĕ! Ытла илемлĕ харăс утма пĕлеççĕ тата хăйсем...

Т а т̆ й а н а. Веç... ман Ваçук пырат̆... Ах-ти! Йепле аллисемпе сулкалат̆ вăл!

2-мĕш сасӑ. Пионерсем, хатĕр пулӑр!..

Пионерсен сасси. Йаланах хатĕр!... Урра! Урра! Урра!.. (*Пионерсен параппан сасси айаккала кайнӑçемĕн оркестр сасси вӑйланат̆.*)

Тат̆йана. Ай-турух!.. Сиккипех килеççĕ...

Анук. Пирĕн колхоз лашине—„Вихĕра" пӑх-ха, Тат̆йана... Малта ташласа çеç пырат̆!..

Тат̆йана. Пет̆ӑ çав ӑйӑрпа тепле чупма хӑрамаст̆...

Анук. Пӑх-ха, пӑх—автобуссем килеççĕ...

Тат̆йана. Хыçалтан трактăрсем... И-их, вĕçĕ-хĕрри курӑнмаст̆!

Оркестр сасси лӑпланат̆. Машинӑсем иртсе кайнӑ шав вӑйланат̆. Инçетре хуткупӑспа параппан çапса каланӑ кĕвĕ сассисем çаплах илтĕнеççĕ. Матĕрне васкаса килет. Аллинче пушмак, ситцӑ тавраш, хут.

Матĕрне. Преми пачĕç, преми! Ах, Анук, Тат̆йана, чун тем пекех савӑнат̆ çав вара! (*Анукпа Тат̆йана Матĕрне йапалисене тытса пӑхаççĕ*).

Анук (*хута пӑхса*). Ку мĕн хучĕ, Матĕрне аппа?..

Матĕрне. Хисеплĕ хут, терĕç. Коммуниссем парнелерĕç. Мĕн тери савӑнĕ-ши çав вара ман Илюш! Пайанах çырса пĕлтеретĕп... (*Хута типтерлĕн тӑваткалласа хĕвне чикет.*) Сире те парат̆чĕç; хĕрсе ĕçлес вырӑнне мӑнкун туса ирттертĕр çав вара... Пайан акӑ хамӑр праçник! Йурла, ташла, савӑн!..

Тайăна. Нихăçан та ёçрен йулмастăп ĕнтĕ...

Матĕрне. Колхоза—вырса кĕлтине те хăйех çыхакан машинă панă.

Анук. Чăнах-и?..

Матĕрне. Тата ахтобус...

Тайăна Ак савăнăç! Пасара та машинăпа кайăпăр-и ĕнтĕ...

Матĕрне. Кришшапа Петăна—коçтум, Саҥука—пурçăн кĕпе, пушмак...

Çамрăк килет, пуштă сумки çакнă. Хаçат-журнал нумай тултарнипе сумкине аран йăтса пырать.

Çамрăк. Пуштă! пуштă!.. хаçатсем, çырусем!..

Матĕрне. Пĕр хаçатне пар-ха мана...

Çамрăк. Интереслă хаçат пайан... Кришша, Петă, Саҥук сăнĕсене ӳкернĕ. Матĕрне аппа, есĕ те пур хушăра! (*Хаçат салатать.*)

Анук. Чăнах-и?..

Матĕрне. Епĕ те пур-и çав вара?.. Пайанах Иљуша пĕлтеретĕп...

Тайăна. Рамкăăшнех тирпейлесе хывса усратăп ку хаçата...

Анук. Епĕ те... Кришша сăнне...

Çамрăк. Шурча колхозĕ хура хăма çине ӳкни те пур унта. Вĕсене кайса намăслантарас-ха... (*Кайать.*) Пуштă! пуштă!..

Сценă урлă пĕр ушкăн çамрăксем кулса, калаçса, иртсе кайаççĕ.

Матĕрне (*хаçата пăхкаласа*). Ха, йепле лайăх ӳкернĕ! Анук йăмăк, пăх-ха: ман пекех-и?..

Анук. Сан пекех. Ман Кришша та лайăх тухнă..

Тайăна. Ара Кришшасем те таврăнаççĕ пулĕ?.. Епĕр апат-çимĕçсене хатĕрлемен...

Анук. Чăнах та, хатĕрлер ара, хатĕрлер...

Сĕтел çине апат-çимĕç хатĕрлеççĕ. Кăкшăмсем çине сăра тултарса лартаççĕ. Кришша килет. Аллинче коçтум.

Матĕрне (*Кришшана курса, йапалисене кăтартать*). Мана та пачĕç, Кришша! Пăх-ха, хаçат çине те ӳкернĕ...

Кришша. Тивĕçшĕн панă, Матĕрне аппа. Ĕçки-çики хатĕр-и? Епĕ „Хурăнвар“ колхозне хăнана чĕнтĕм...

Анук. Хатĕр, Кришша, хатĕр.

Тайăна (*сăра тултарса илсе пырать*). Ĕç-ха, Кришша... (*Анук та, Матĕрне те сăра парса, ĕçме сĕнеççĕ.*)

Кришша. Чимĕр-ха есĕр, майĕ пултăр...

Тайăна. Малтан манне ĕç-ха, Кришша... Пирĕн иксĕмĕрĕн каçарттармала. Çуркунне санпа йатлаçнишĕн хам тĕллĕн те нумай шухăшласа кулянатăп...

Кришша.. (*Татйана куркине тытса ёҫет*). Ун ҫинчен кам аса илет пайанхи кун, епё тахҫанах маннӑ, Татйана... (*Анук куркине тытатӑ*). Коҫтума пуҫтар есё, Анук... (*Ёҫет.*)

Анук (*хавасланса*). Киле пыратӑн-и, Кришша?..

Кришша (*куркине Анука парса*). Киле пёрле кайӑпӑр...

Матёрне. Ман куркари сӑрана ёҫ...

Кришша. Ну, Матёрне аппа, сан прахут ҫине ларса курас килет-и?

Матёрне. Ӑҫта кайас-ха вара ҫав ман?.. Иљуш патне кайса курас шухӑш пурччё те...

Кришша. Иљуш Горькинче вёт сан?

Матёрне. Ҫавӑнта та... Кайса пулмас пуљ...

Кришша. Хаљ кайатӑн ёнтё, сана Горькинче пулакан крайри колхозник-ударниксен сљотне делегата суйларӑмӑр.

Матёрне. Чӑнах-и?..

Кришша. Иљуша та курӑн унта... Хӑв пурнӑҫу ҫинчен те, колхоз пурнӑҫё ҫинчен те каласа пар. Горькири рабочисене, пире пулӑшу панӑшӑн, колхоз йачёпе тав ту.

Матёрне. Кётменччё... Ак савӑнӑҫ!.. Ак савӑнӑҫ!..

Кришша. Анук... Лашасемпе чупнӑ ҫёре кайса курар мар-и?..

А н у к (*хавасланса*). Кайар, Кришша, кайар...

М а т ё р н е. Кайăрах çав вара, кайăрах...

Анукпа Кришшана хирĕç В а ç у х х а п а У к ç и н е килеççĕ.

У к ç и н е. Ваçухха, пăх-халĕ... Ман куç тĕтрелĕрех кăтартать... Анук хĕрĕмпе кĕрÿ пулмарĕç-и çавсем?

В а ç у х х а. Çавсем, çавсем, Укçине...

У к ç и н е. Тамаша! кăмăллах калаçса пыраççĕ-и?..

В а ç у х х а. Йуратнă хĕрпе каччă пекех пăшăлтатса калаçса карĕç.

У к ç и н е. Апла пĕрлешрĕç пулĕ-ха, пĕрлешчĕрех...

В а ç у х х а. Мĕншĕн илсе кайнă çав есĕ Кришша патĕнчен Анука?..

У к ç и н е. Ват-супнă мар-и, ара, ват-супнă мар-и... Атта, пĕрер курка сăра ĕçер...

В а ç у х х а. Ĕçесси-мĕнни...

У к ç и н е. Тамаша! Мĕн ĕçесси-мĕнни тесе тăран? Питĕ лайăх сăра тунă тенине илтнĕччĕ епĕ. Пылпа тутлантарнă, терĕç...

В а ç у х х а. Çапла пулĕ те... хăвăр ваљљи хатĕрленĕ ăна...

У к ç и н е. Калаçса тăран! Колхоза кĕр, санăн та пулать...

М а т ё р н е (*Паљук арăмĕпе Укçинене курса*). Ара, сăра ĕçме килместĕрçке есĕр? Килĕр-ха, килĕр....

Уксине. Аҫа, Ваҫухха... епӗр ӑна-кӑна пӑхса тӑмӑпӑр... *(Ваҫуххана ҫавӑтса сӗтел хушшине лартаҫҫӗ, сӑра параҫҫӗ, умне апат-ҫимӗҫ касса хураҫҫӗ.)*

Уксине. Вӑт... колхоз ҫав епӗр!..

Выставкӑ патнеле Уҫланкинпа Таис килеҫҫӗ. Калчасене пӑхкалаҫҫӗ.

Таис. Пӑх-ха, пӑх, Павӑл, ытла та хӳхӗм ку сӗлӗ калчи...

Уҫланкин. Тулӑ та йулмасӑ...

Таис. Хӑй ӗмӗрӗнче кам курни пур кун пек хӳхӗм калчана?... Пӑх-ха, ак ку тата вӑйлӑрах...

Уҫланкин. Факт, „Ҫӑлкуҫ" колхозӗ. Здо̀рӑвӑ!

Таис. Сан хыҫран сӗтӗрӗнсе ҫӳресе колхозра ӗҫлеймерӗм кӑҫал. Пӑх-халӗ, йепле савӑнаҫҫӗ пайан вӗсем!

Уҫланкин. Факт, анчах есӗ те пулин ан йатлаҫ, Таис...

Матӗрне. Пӑхӑр-ха, хай Уҫланкин текенни мар-и ҫав?

Уксине. Ӑҫта? Ман куҫ витӗрех курмасӑ те, паллаймастӑп...

Татйана. Ҫавӑ, ҫавӑ... Йулташ, есӗ мӗн милици тумне хывса килнӗ пайан?

Матӗрне. Сӑра ӗҫсе кайӑр! Ытла палламан ҫынах марҫке ҫак есӗр...

Таис. Павӑл, сана палласҫӗҫке вӗсем...

Уçланкин. Факт, вĕсен колхозĕнче пĕр ĕçе тĕплĕ туманшăн милицирен тухса ӳкрĕм...

Уксçине. Уçланкин, сăра ĕçме кил, сăри тутлă!..

Уçланкин. Спаçибă... Кайар кунтан, Таис...

Таис. Санпа таçта пырсан та намăса кĕрсе çӳре... (*Кайаççĕ.*)

Матĕрне. Милицирен кăларнă терĕ ăна...

Уксçине. Тамаша! Çавă кирлĕ...

Татйана. Ха! Çитăрпа Паљук килеççĕ...

Çитăрпа Паљук килеççĕ. Паљук хăй ани çинче шăтнă калчана йатнă.

Çитăр. Тур çырлахтăр, мĕн туса тăран есĕ унта, хыçалта? Айта-ха, танаштарса пăхар: сан калча лайăх-и, пирĕн-и?..

Паљук. Ан васкат есĕ, йакуђă-вађă...

Матĕрне. Ĕненмерĕн çав вара... Пăх-халĕ ĕнтĕ...

Паљук (*арăмне курса*). Карчăк, мĕн туса ларатăн есĕ кунта?..

Ваçухха. Сăра ĕçетĕп, колхоз сăри ту-утлă...

Çитăр. Паљук кума çуркуннех колхоза кĕр тесе каланă епĕ...

Паљук. Йакуђă-вађă, темерĕн... Лĕпĕртетет тата... Колхоз тыррине хураллас вырăнне амбар умĕнче вил-ӳсĕр выртаканни кам пулнăччĕ-ха вăл?..

Ç и т ă р. Мана уншăн пĕçертнĕ, кум... Манпа ан калаç есĕ... Епĕ икĕ çул колхозра, икĕ çул... (*Айăккала пăрăнать.*)

Т а й а н а. Калчуна колхозсеннипе йунашар кайса ларт, Паљук. Пирĕнне çеç мар, санне те курччăр...

М а т ĕ р н е. Паљук йединоличникĕн калчи тесе çырса пĕлтерĕпĕр çав вара...

В а ç у х х а. Паљук, йунашар ларса намăса ан кĕр...

П а љ у к. Йакуђă-вађă... есĕр çĕнтертĕр! (*Калчине çĕре пăрахать.*)

М а т ĕ р н е (*сăра тултарса пырса*). Сăра курки тыт-ха, колхоза кĕр çав вара...

Ç и т ă р. Тур çырлахтăр... пурăнатăн кĕтўç-сĕр сурăх пек çапкаланса... Калап сана çуркуннех колхоза кĕр, тесе...

Т а й а н а (*сăра тултарса пырса*). Манне те ĕç-ха... Пĕрле ĕçлесе пурăнăпăр, Паљук.

П а љ у к. Пуçа ан çавăрăр есĕр, йакуђă-вађă... (*Икĕ куркине те тытса*). Инкек мăшăрпа килет, тетчĕç ĕлĕк, телей те мăшăрпа çўрет мĕн, йакуђă-вађă... Пĕрле пурăнмала пултăр еппин! (*Ĕçет.*)

**Ч а р ш а в.**

Редактор Н. К. ЯНГАС
Техн. редактор Ф. Я. ЯКОВЛЕВ

Сдано
в произв. 2|I
1938 г. Подп. к печати
[illegible] 27|I-1939 г. Печ. лист. 2,25
Печ. знак. 45056 в п. л. Тир. 2000 экз.
Формат бумаги 60×92 1/32. Чу-
вашглавл. № 1561. Зак.
№ 4187. Чуваш-
гиз № 339.

Типография № 2 Наркомместпрома
Чувашской АССР, г. Алатырь.

Цена 1 р. 65 к.

Н. МРАНЬКА

★

# ХОРОШО ЖИВЕТСЯ

На чувашском языке

Чувашгосиздат
1939